Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

*28 (8192) №* * *Юн кун, 2014 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 16-мĕшĕ* * *Хакĕ ирĕклĕ*

## Ял хуçалăх министрĕ хуçалăхсенче пулчĕ

Çур аки çывхарса килет. Çак ответлă тапхăрта мĕн туса ĕлкĕрмелли çинчен иртнĕ эрнере районти ял хуçалăх предприятийĕсен тата Х(Ф)Х ертӳçисен канашлăвĕнче пӳстарăнса калаçнăччĕ ĕнтĕ. Иртнĕ шăмат кун вара пирĕн района Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ С. Павлов килсе кайрĕ, хуçалăхсенче çур акине хатĕрленес ĕç епле пынипе паллашрĕ.

Чи малтанах Сергей Владимирович район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕпе В. Ананьевпа «Оринино» хуçалăхра пулчĕ. Машинăпа трактор паркĕнче çав кун шăпах техника тĕрĕслевĕ иртетчĕ.

– Çур акине паян тесен паян тухма хатĕр. Çунтармалли-сĕрмелли материалсем çитеççĕ. Механизаторсем те пур, – терĕ хуçалăх ертӳçи Ю. Шишокин Сергей Владимировича.

Министр ĕç условийĕсемпе кăсăкланчĕ. Ку енĕпе те асăннă хуçалăх ĕçченĕсен пăшăрханмалли çук.

– Февраль уйăхĕнчен пуçласа ĕç укçине 16 процент таран хăпартрăмăр. Апрельтен пуçласа тата 20-шер процент преми пама пуçлатпăр, – тет Юрий Николаевич.

Ку çеç те мар. Отпуска кайнă чух тата ял ĕçченĕсене пĕр оклад чухлĕ преми пареççĕ.

Сергей Владимирович выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи лару-тăрупа та кăсăкланчĕ. Хуçалăх ертӳçи каланă тăрăх паян «Оринора» 205 ĕне. Сĕте хуçалăх Етĕрнери сĕт-çу заводне ăсатать. Асăннă предприятипе ĕçлени – Орининсене çур акинче те пулăшу.

– Эпир ытти хуçалăхсем пек банксенче кредит илместпĕр. Çур аки тума та, тыр-пул пухса кĕртме те партнер пулăшать, – тет хуçалăх ертӳçи.

Кăçал та Етĕрнесем вĕсене 1–1,5 млн. тенкĕ пама шантараççĕ.

«Оринино» хуçалăх ĕçченĕсем министрпа тĕл пулнă чух чуна хумхантаракан ыйтусене те хускатрĕç. Министр чи малтанах ял çыннисене килти хушма хуçалăхсене аталантарма паракан кредитăн процент ставкине саплаштармалли субсиди республикăна килсе çитни çинчен каласа савăнтарчĕ.



Ял çыннисене патшалăх паракан ытти пулăшусем те кăсăклантараççĕ. Министр çакна палăртрĕ. Пĕлтĕр минераллă удобренисем туяннă чух парса пулăшма федераллă бюджетран укçа-тенкĕ килмен пулсан та республика ял ĕçченĕсене çак çăмăллăха пачĕ. Кăçал вара ун вырăнне чылай çĕнĕ пулăшусем хушăнчĕç. Усă куракан кашни гектар пуçне укçа парса пулăшать. Хранилищĕсем тусан тухса кайнă укçа-тенкĕн 30 процентне патшалăх тавăрса парать. Е тата выльăх-чĕрлĕх фермисене реконструкцилеме кредита 15 çуллăха пама пуçлаççĕ. 8 процентне федераци бюджетĕнчен, тепĕр 3 процентне республика бюджетĕнчен саплаштарса парать патшалăх.

Ĕçлекене патшалăх та пулăшать. «Оринино» хуçалăх яланах техникăна «Чувашагролизинг» урлă туяннă пулсан, халь çак ĕçе «Рослизинг» урлă та çăмăллăнах пурнăçлама пулать. Сергей Владимирович документсене хатĕрлесе парас енĕпе министерство пулăшма хатĕррине пĕлтерчĕ. Документсене Мускава Интернетпах яма пулать. Техникăна вара киле килсех пареççĕ.

В. Ананьев каланă тăрăх «Герой» хуçалăх кăçал «Рослизинг» урлă 3 техника хатĕрĕ туянать.

Сергей Владимирович ял çыннисен кашни ыйтăвĕ çине хуравларĕ.

Ун хыççăн «Путь Ильича» агрофирмăна çитсе килчĕ. Унăн ертӳçи А. Воробьев хуçалăх çур акине хатĕррине пĕлтерчĕ.

Вут пек «çунтарса» тăракан Геннадий Шарапов тĕп инженер пур чухне урăхла пулма та пултараймасть.

– Хăйĕн ĕçне çав тери юратса тăвать. Ун пек специалистсем халь сайра тĕл пулаççĕ, – тет Алексей Валентинович.

Механизаторсем ку хуçалăхра та çителĕклĕ. 2 «Бюлер» трактора çамрăксене шанса панă. Çур акине кăçал Иван Васильевпа Алексей Воробьев тухĕç ют çĕр-шыран кӳрсе килнĕ çав вăйлă «хурçă утсемпе».

Хуçалăхра вăрлăх та, минераллă удобрени те çитет.

– 250 тонна минераллă удобренишĕн укçине тӳлерĕмĕр. Кашни кун 40-шер тонна кӳрсе килетпĕр, – тет А. Воробьев.

Алексей Валентинович министра выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕн малашлăхĕпе те паллаштарчĕ.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ çĕнĕ КЗС-ра пулса курчĕ.

Министр та мĕн курнипе кăмăллă пулчĕ. Ял ĕçченĕсене çур акине ăнăçлă irttерсе пысăк тухăç илме ырă сунчĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: С. Павлов (иккĕмĕшĕ) «Путь Ильича» хуçалăх ĕçĕпе паллашать.**

**Сăмах – райадминистраци ĕçченĕсене**

## Мĕн акатăн – çавă шăтать

**Уйрăм çынсем эрех ăшне путни ахаль те куç умĕнчех: пĕрисем ирех ялти лавккана утаççĕ, теприсем эрнелĕх пурăнма «фанфурик» туянас тесе райцентра «ĕçпе кайма» та ӳркенмеççĕ. Чăнах та кунти хăш-пĕр «точкăсенчен» çак вилĕм шĕвекне вуншар кĕленче тултарса тухакансем те сахал мар. Кун пеккисен йышĕнче вара хĕрарăмсем те пур.**

**Çак кунсенче районти предпринимательсен канашĕ, хĕрарăмсен канашĕ тата депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем районта çакăн пек 20 ытла «точка» пуррине палăртса вĕсен хуçисем патне уйрăммăн çырупа тухрĕç. Пиллĕкĕшĕ калаçу вăхăтĕнчех спирт пур шĕвеке малашне сутма чарассине пĕлтернĕ. Ку та савăнтарать: тен пĕр вунă ача та пулин амăшĕн ăшшине ытларах туйма пуçлĕ.**

**Хĕрарăм эрех ĕçни çемьешĕн мĕн тери пысăк хуйхă, чăн-чăн инкек пулнине çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен районти комиссин ларăвĕсене хутшăннă май тата ытларах туйса илетĕн. Мĕн чухлĕ ача ашшĕ-амăшĕн тимлĕхне курмасăр ӳсет.**

**Паян çак хăрушă пулăм пирки çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен районти комиссин ĕç-хĕлне йĕркелесе пыракан секторĕн ертӳçи Лариса ПЕТРОВА хăйĕн шухăшне пĕлтерме кăмăл турĕ:**

– Мĕн акатăн – çавă шăтать, теççĕ халăхра. Çак каларăша паян шутласа кăларман. Халăх ăруран ăрăва куçса пыракан пурнăçа сăнласа, пур ăс-хакăла ăса хывса авалтанпах çапла каланă. Тĕрĕс мар пулнă пулсан ку каларăш тахçанах манăça тухнă пулĕччĕ. Çак сăмахсем вара паянхи кун та питĕ çивĕч.

Ĕçке путнă ашшĕ-амăшĕн ачисен пурнăçĕн анлă çулĕ çине мĕнле тухмалла-ши? Ашшĕ-амăшĕ йĕркесĕр пурăннине курса вĕсем урăх çула тĕрĕс суйласа илме пултарайраççĕ-ши? Çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен районти комиссин кашни ларăвĕнче эпир ашшĕ-амăшĕ эрехпе иртĕхсе ачисем çинчен маннă тĕслĕхсемпе тĕл пулатпăр. Кун пек çемьесенче тата пĕр е икĕ ача кăна мар, нумай чух ку çемьесем нумай ачаллисем.

Акă иртнĕ кварталта кăна ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаншăн (РФ Административлă право нормисене пăснин кодексĕн 5.35 статйи) çырнă протоколсем тăрăх 32 ĕç пăхса тухрăмăр. Саккунпа килĕшӳллĕн явап тыттартăмăр.

Хĕрарăмсем эрех ĕçсе çемье çинчен манни ытларах пăшăрхантарать. Эрех ĕçнинчен сипленме хăйсен кăмăлĕпе каякансем те пур, анчах «эпĕ алкоголик мар» тесе хăйсем чирлине йышăнманнисем те сахал мар. Çын алкоголизм чирĕпе чирлесси çине çемье, общественность, коллектив эрех ĕçнине сивлемесĕр йышăнни те витĕм кӳрет.

Эрех ĕçес тĕлĕшпе çынсене тăватă ушкăна уйăрма пулать: эрех пачах ĕçменнисем, сайра-хутра ĕçекенсем, час-часах ĕçекенсем (эрехпе иртĕхекенсем) тата алкоголиксем. Юлашки икĕ ушкăнне кĕрекенсем «мĕнпе чирлерĕн çавăнпа сиплен» тесе хăйсем тĕллĕн ниепле те эрех айĕнчен тухаймаççĕ. Вĕсем врач пулăшăвĕсĕр мала каяймĕç. Çавăнпа та вĕсене çывăх çыннисемпе юлташĕсен нарколог врач патне кайма сĕнмеллех тесе шутлатăп. Кун пек те ĕç тухмасть пулсан пирĕн пата – çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен районти комиссин ĕç-хĕлне тивĕçтерекен сектора (район администрацийĕн çурчĕ, пĕрремĕш хут) та килме пултаратăр. Эпир яланах кирлĕ сĕнӳ-канашпа пулăшма хатĕр. Ачасем йĕркеллĕ ӳсчĕр çеç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Раççейре**

## Президентпа – тӳрĕ лини

Раççей Федерацийĕн Президенчĕпе В. Путинпа çулсеренех йĕркелекен тӳрĕ лини кăçал апрелĕн 17-мĕшĕнче иртет. Йăлана кĕнĕ тăрăх çынсем президента çĕр-шывăн обществăпа политика, экономикăпа социаллă пурнăçĕпе, тĕнчери лару-тăрупа çыхăннă ыйтусем парĕç.

Президентпа йĕркеленĕ калаçу кăнтăрлахи 12 сехетре пуçланать. Ăна «Первый», «Россия 1», «Россия 24» телеканалсемпе пăхма тата «Маяк», «Вести FM», «Радио России» радиостанцисен эфирĕнче итлеме пулать.

Ыйтăва тĕрлĕ майпа пама пулать: 8-800-200-40-40 тӳлевсĕр номерпе шăнкăравласа, 0-40-40 номер çине sms-хыпар (вырăсла çырмалла, 70 паллăран ытла мар) ярса, Интернет урлă – www.moskva-putinu.ru е москва-путину.рф сайтри «Задать вопрос» пайра. Кăçал пĕрремĕш хут ыйтусене видео мелĕпе панине те курма пулĕ.

Ыйтусене апрелĕн 10-мĕшĕнче йышăнма пуçланă, вĕсене тӳрĕ лини пĕтиччenex йышăнаççĕ.

Пĕрремĕш тӳрĕ линие 2001 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче йĕркеленĕ. Ун чухне 2 сехет те 20 минутра президент 47 ыйтăва хуравланă. Пĕлтĕрхи тӳрĕ лини 4 сехет те 47 минут пынă, В. Путин 85 ыйту çине хурав пама ĕлкĕрнĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

**Пĕрлехи информаци кунĕ**

## Ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ

Паян районта Пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн темисем: «Чăваш Ен Пуçлăхĕн 2014 çулхи мартăн 20-мĕшĕнчи 34 № «Спорт тата сывлăх кунĕ çинчен» Указне пурнăçласси çинчен», «2014 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса социаллă пенсисене индексацилесси çинчен», «Совет халăхĕ 1941 – 1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă Çĕнтерĕве халаллană мероприятисем шайĕнче тата 1941 – 1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăпа çыхăннă çар мухтавĕпе асăнăвăн ытти кунĕсене халалласа вăрçă ветеранĕсене чыслассипе тата çапăçусен хирĕсенче вилнисен ячĕсене яланлăхах асра хăварассипе акцисем йĕркелесси çинчен», «Экологи субботникĕсем, Йывăç кунĕн çуркуннехи тапхăрне йĕркелесси тата ирттересси, ялсен территорийĕсене, çул хĕррисене, масарсене тата ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи çулсене тасатса тирпейлесси çинчен».

Информаци кунне ирттерме района республика тĕп хулинчен Чăваш Республикин финанс министрĕн çумĕ Валерий Иванов ертсе пыракан ушкăн килет. Информаци ушкăнĕсем Муркаш, Мăн Сĕнтĕр, Йӳçкасси, Хорнуй ял тăрăхĕсенче пулса ĕç коллективĕсемпе тĕл пулма палăртаççĕ, район администрацийĕнче çынсене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнаççĕ.

**Хамăр инф.**

**Саламлатпăр**

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи ака уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 49-мĕш № указĕпе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăх аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, муниципалитет службинче тӳрĕ кăмăлпа тата тухăçлă ĕçленĕшĕн Муркаш район администрацийĕн ĕçĕсен управляющине **Александр Валерианович КРАСНОВА** «Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн» Мухтав паллипе наградăланă.



Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Иштерек ялĕнче пурăнакан юратнă аннене, хунямана, асаннене, тăхлачăна, тăвана – **Зоя Архиповна КОЗЛОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ юнашар пулни пирĕншĕн савăнăç. Санăн малашнехи çулу такăр та тикĕс пуласса шанатпăр. Эсĕ çĕр ĕçĕпе çывăх ӳсни, ĕçрен ютшăнманни, ачусемпе çывăх тăванусене юратни тата вăй çитнĕ чухлĕ пулăшни сана Турă панă çул тесе йышăнатпăр. Çак çултан пăрăнмасăр санăн татах нумай ырă курса, пире савăнтарса тата пирĕн савăнăçпа хĕпĕртесе пурăнмалла пултăр.

**Салампа: 5 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, пускилсем.**

**ООО ТД «РенАвто» – официальный дилер заводов ОАО «Гомсельмаш» и ЗАО СП «Брянсксельмаш» в Чувашской Республике предлагает зерноуборочные и кормоуборочные комбайны марки «Полесье».**

**Предлагается возможность воспользоваться уникальным предложением Сбербанка России по программе предоставления кредитов юридическим лицам Российской Федерации на покупку техники, произведенной в Республике Беларусь. Данная программа дает возможность сельхозтоваропроизводителям Российской Федерации оформить кредит на технику «Полесье» с годовой процентной ставкой в пределах 4%.**

**Контакты и адрес: ООО ТД «РенАвто», ЧР, п. Кугеси, ул. Механизаторов, 13.**

**Тел.: 8(83540)2-10-28, 2-36-07, 8(8352)37-33-34.**

2014 çул – Культура çулталăкĕ

# Ырă ĕçсемпе паллă тăваççĕ

***Çĕр-шывĕпех кăçал Культура çулталăкĕ иртет. Çакă чи малтанах культура ĕçченĕсем умне уйрăмах пысăк задачăсем лартать. Мĕнле тĕллевсем палăртаççĕ, мĕнпе паллă тума шутлаççĕ Культура çулталăкне Москакассинчи информаципе культура центрĕнче вăй хуракансем? Çакăн пирки каласа пама ыйтнă район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ центр ертӳçипе, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕпе Галина ГОЛУБЕВĂПА тĕл пулнă май:***

– Москакассинчи информаципе культура центрĕнче вăй хуракансем кăçал Культура çулталăкĕ иртерме йышăннине ырласа кĕтсе илчĕç. Çакна вĕсем хăйсен маттур та пултарулла ĕçĕсемпе палăртса хăварма тĕв тăваççĕ.

Культура çулталăкĕнче кунти юсав ĕçĕсене вĕçлеме, хор коллективĕ валли çĕнĕ çи-пуç çĕлетме, çĕнĕрен аппаратура, вăл шутра баянсем туянма, кĕр мăнтăрĕпе вара «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ушкăнĕн 60 çулхи юбилейне чаплă паллă тума шухăшлатпăр. Çак ĕçсене туса иртерме Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов пысăк пулăшу кӳме шантарать. Паянхи куна илес пулсан çак ĕçсене пурнăçлама пуçăнтăмăр та ĕнтĕ.

Информаципе культура центрĕнче тĕрлĕ кружоксем ĕçлеççĕ. «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ушкăнĕ тата «Шураппа» фольклор ушкăнĕ çĕнĕ концерт программисем хатĕрлерĕç, халăх умне кĕркуннех тухма тытăнчĕç. Концертсемпе вара хамăр районта кăна мар, Шупашкар районĕнчи Культура çурчĕсенче пулса та çынсене савăнтараççĕ. «Шураппа» ушкăн кĕркуннерен вара 11 хутчен, «Шуçăм» 7 хутчен сцена çине тухрĕç.

«Шураппасем» пирки лайăххине чылай каласа пама пулать. Вĕсен репертуарĕнче юрри те, ташши те, шӳчĕ те пур. Кашни номерех куракансем тăваллăн алă çупса йышăнаççĕ, татах сцена çине чĕнеççĕ. Кунтан ырри вара нимĕн те пулма пултараймасть.

Кам-ха йĕркелеме пултарчĕ çакăн пек маттур та пултарулла ушкăна? 1970-мĕш çулсенче Москакассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуçăм» юрăпа ташă ушкăнне Софья Ершова ертсе пынă. Нумай çĕре çитсе курма пултарнă çак пултарулăх ушкăнĕ: Чул хулана, Мускава, Мари Республикине, хамăр республикăри районсенче те тăтăшах пулнă. Вăл вăхăтра концертпа икшер автобуспа çӳренĕ. 60 – 70 çын таран пулнă «Шуçăм» ушкăнра. Унта çӳренисем вăл вăхăтсене халĕ те ырăпа кăна аса илеççĕ.

Шăпах ĕнтĕ çав вăхăтсене аса илсе Софья Ершовăпа Вера Беспалова хăйсен пултарулăхне халăх умне кăларас терĕç. Паллах, сахал мар тăрăшрĕç вăл вăхăтри юрăсене тупас тесе. Ялсем тăрăх çӳресе вырăнти халăх юррисене репертуара кĕртме тăрăшрĕç. Чăваш композиторĕсен юррисемпе, ташăсемпе тата шухăшлаттаракан шӳтсемпе программăна пуянлатрĕç. Концерт программине пуян та анлă йĕркелесе эрнесерен иккĕмĕш çул ĕнтĕ сцена çине тухать çак ушкăн. Концерт программине С. Ершова ăста ертсе пырать.



Камсем çӳреççĕ-ха ку ушкăна? Вĕсем пурте тивĕçлĕ канăва тухнă 52 – 83 çулсенчи асаннесем. Чи асли вара Елена Пушкина 83 çулта. С. Ершова, В. Беспалова, К. Сорокина, П. Никифорова, Г. Шалтынова, Ф. Мочалова, Л. Ванюшкина, Е. Пушкина, В. Волкова, Е. Иванова – пурте сцена маçтăрĕсем. Хут купăспа калаканĕ – Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н. Кондукторова.

«Шуçăм» юрăпа ташă халăх ушкăнĕ те хăйĕн пултарулăхне аталантарас тесе самай вăй хурать. Программăна çĕнĕ юрăсемпе, ташăсемпе пуянлатсах тăрать. «Чечеклен, юратнă Муркаш ен» смотр-конкурса хутшăнассипе те коллектив чылай тимлерĕ. Р. Семенов çамрăк ертӳçĕ пулин те, ушкăнпа пĕр чĕлхе тупма, килĕштерсе ĕçлеме пĕлет.

И. Петровăна районта нумайăшĕ аван пĕлет. Вăл лартнă илемлĕ ташăсем çынсен чĕрине тыткăнлама пăрахмаççĕ. Концерт программине вăл ытларах халăх ташшисемпе пуянлатма тăрăшать. Вăл Москакассинчи Культура çуртĕнче ĕçлеме пуçăннăранпа кăçал шăпах 20 çул пулать. Тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленет ăна вăл. Унăн репертуарĕнче паянхи куна 100-е яхăн ташă.

«Шуçăмăн» аккомпаниаторĕ – Н. Кондукторова. Вăл та самаях вăй хурать çак ушкăна илемлĕ ертсе пырас тесе. Ытларах хамăр район композиторĕсен Ю. Жуковăн, В. Романовăн, М. Ягуновăн, Р. Петровăн юррисемпе пуянлатаççĕ ертӳçĕсем репертуара.

Ĕçне кура хисепĕ, теççĕ. Çаплах пулĕ çав. «Чечеклен, юратнă Муркаш ен» смотр-конкурсра халăх ятне тивĕçнĕ юрăпа ташă ушкăнĕсем хушшинче пирĕн коллектив 1-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ. Культура çулталăкĕнчи пысăк çитĕнӳ пулчĕ ку пирĕншĕн.

Пирĕн пата концертсемпе килекенсем те йышлă. Иртнĕ 3 уйăх хушшинче Шупашкарпа Муркаш районĕсенчи, Шупашкарпа Пенза хулисенчи артистсем пĕтĕмпе 11 концерт кăтартрĕç. Пенза хулинчен килнĕ артистсем пысăк пуканесемпе ачасене интереслĕ спектакльпе савăнтарчĕç.

Кашни ушкăн программи хăйне май интереслĕ те пуян. Чăнах та мĕн тери илемлĕ юрă-кĕвĕ итлесе те савăнса пăхаççĕ куракансем. Чăваш çĕр-шывĕ юрă-кĕвĕрен чăннипех те пуяннине туйса илетĕн. Нимĕнле пултарулăх ушкăнĕн те юррисем пĕр пек мар.

Чăннипех юлашки вăхăтра çынсем телевизор умĕнче ларса ывăнса çитни сисĕнме пуçларĕ. Татах та интереслĕрех пултарулăх ушкăнĕсене йыхравлама ыйтаççĕ кашни концерт хыççăнах. Çавăн пек интереслĕ концертсене вара çамрăксем тухманни çав тери пăшăрхантарать. Эпир çамрăк чухне пĕр концертран та юлмасттăмăрччĕ. Çав вăхăтрах ачасене те çитĕнтернĕ, вĕрентсе аслă çул çине кăларнă, юрлама-ташлама та çӳренĕ. Тен паянхи çамрăксем пурнăç çине урăхларах пăхаççĕ?

Çирĕплетсех çавна каласшăн. Пирĕн информаципе культура центрĕ пĕрре те пушă лармасть. Кашнин валлиех интересли, усăлли, кирли пур кунта. Малашне те çаплах пуласса эпир çирĕп шанатпăр.

Çурт-йĕр строительстви

# Ветерансем хваттерлĕ пулаççĕ

***Аслă Отечественнăй вăрçăра нимĕç эшкерне çапса аркатса Çĕнтерӳ тунăранпа кăçал 69 çул çитет. Çăмăл килмен Çĕнтерӳ. Çухату пысăк пулнă. Вăрçăран сывă таврăнма пултарнисен шучĕ те чаксах пырать. Çак вăхăта районта 52 вăрçă участникĕпе вăрçăра тата вăрçăран таврăнсан вилнĕ салтаксен 244 тăлăх мăшăрĕ пурăнать.***

***Федерацин «Ветерансем çинчен» Саккунĕпе килĕшӳллĕн хăйсен пурнăç условийĕсене кура вăрçă участникĕсемпе вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх мăшăрĕсене хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма, хваттер туянма пулăшма пăхнă. Ку ĕç районта мĕнле пулса пыни пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарас енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхне Владимир НИКИТИНА каласа пама ыйтрăм:***

– Саккунпа килĕшӳллĕн хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсем тивĕçтермен вăрçă участникĕсене тата вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх мăшăрĕсене пурне те черете илнĕ. Вĕсене хваттерсемпе тивĕçтересси йĕркеллех пулса пырать.

Паянхи кунччен асăннă категорисене кĕрекен 244 çынна çĕнĕ хăтлă хваттерпе тивĕçтертĕмĕр. Çавна валли укçа-тенкĕне патшалăх уйăрать. Палăртса хăвармалла, ытларахăшĕ çĕнĕ хваттер илме кăмăл тăвать.

Иртнĕ çул вăрçă участникĕсемпе тăлăх мăшăрсем 18 çын хваттерлĕ пулчĕ. Халĕ вара черетре тăракансем 12 çын юлчĕ. Федераци шайĕнчен укçа-тенкĕ уйăрнă май вĕсем те çывăх вăхăтрах хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултарĕç.

Социаллă хӳтлĕхе тивĕçлĕ ытти категорие кĕрекен çынсем те паян районта пулăшу мелĕсĕр юлмаççĕ. Акă нумаях пулмасть Мăн Сĕнтĕр ялĕнче 15 хваттерлĕ 3 хутлă пурăнмалли çурт тунă çĕрте строительство ĕçĕсем пуçланчĕç. Кунти ĕçсене акционерсен «Фирма «Чувашагроинвестстрой» хупă обществи пурнăçлать. Объекта кăçалах туса пĕтерме палăртнă. Кунти 15 хваттерте вара тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасем пурăнма тытăнĕç.

Сăмах май Мăн Сĕнтĕртех паян нумай хваттерлĕ тепĕр çурт тунă çĕрте те строительство ĕçĕсем пыраççĕ. Кунти çĕнĕ çуртри хваттерсене юхăнчăк тата ишĕлчĕк çуртсенче пурăнакансене уйăрса парăпăр.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

Тĕпре ватă çыннăн ыйтăвĕ

# Тимлĕхсĕр мар, хӳтлĕхре

Иртнĕ эрнере районти ветерансен пысăк йышĕ, вăл шутра пенсионерсен пĕрлĕхĕ, АПК ветеранĕсен канашĕ тата ветерансен канашĕ черетлĕ ларăва иртерме Йӳçкасси ял тăрăхне çитсе килчĕ. Çавăн пекех вĕсемпе районти ответлă ĕçченсем те пулчĕç.

Сумлă делегаци чи малтанах пултарулла ертӳçĕ, ял хуçалăх производствин анлă тавра курăмлă йĕркелӳçи, чылай шайри хисепе тивĕçнĕ Раççейри ял хуçалăх наукисен академийĕн çĕр улми хуçалăхĕн Пĕтĕм Раççейри наукăпа тĕпчев институчĕн «Ударник» ФГУП директорĕ пулнă П. Давыдова халалланă Асăну хăми умĕнче пуç тайрĕ.

Ĕçлĕ çул çӳрев ватă çынсемпе инвалидсен Йӳçкассинчи интернат çуртне илсе çитерчĕ. Кунта чи малтан асăннă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Кузьмин пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ. Пухăннисем çĕрпе, тирпей-илем кĕртессипе кăсăкланчĕç. Ыйту çул-йĕр тавра та пулчĕ, тĕслĕхрен, Вăрманкассине кĕрсе тухма питĕ йывăр.

– Пирĕн ял тăрăхĕнчи çул-йĕр пĕтĕмпе 32,8 çухрăм тăршшĕ. Муниципалитет шайĕнчи мĕн пур çула тытса тăма бюджетра укçа-тенкĕ çитсе пыраймасть. Çавăнпа та юсав ĕçĕсене тĕллĕн-тĕллĕн пурнăçлама тивет. Паллах, пĕр харăс пур ĕçе пурнăçлама май çук, юсама тăрăшăпăр, – терĕ Анатолий Николаевич ларутăрăва ăнлантарнă май.

Асăннă делегаци сумлă çулхи çынсенчен тăрать, çавăнпа та вĕсене ытларах асăннă учреждени ĕç-хĕл кăсăклантарчĕ. Кашниех кунта хӳтлĕх тупнă çынпа калаçма тăрăшрĕ. Сӳтсе явмалли вара вĕсен чылай пулчĕ. Интернат çурта В. Шивирева ăнăçлă ертсе йĕркелесе пырать. Хӳтлĕх тупнисене кунти пурнăç туллин тивĕçтерет. Çакна эпир вĕсемпе калаçнинчен тата вĕсен кăмăл-туйăмĕнчен пĕлтĕмĕр. Шăпа тĕрлĕрен çынна пухнă, чи çамрăкки 48 çулта, 90 çула çитнисем те пур, хăшĕ тата ултавçăсен серепине лексе пурăнмалли çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă. Çапла вара çакăнти кашни çын патшалăх пулăшăвне тата кунта вăй хуракан тимлĕхне аван туять.

Муркашри тĕп больницăн Йӳçкассинчи пĕтĕмĕшле врач практикин офисĕ тата ун çумĕнчи медицина сестрисен пулăшăвĕн уйрăмĕ те йывăр шăпаллă тата аслă ăрури çынсемшĕн питĕ меллĕ.

– Тĕрлĕ йывăр чир-чĕрпе нушаланакансене килти условире пăхма çăмăл мар е пачах та май çук. Шăпах çакăн пек çынсене илсе килеççĕ пирĕн пата. Медицина услугипе тивĕçтересси çӳллĕ шайра. Хăш-пĕр ĕçе кунта тума май килменнипе тата чир шайне кура малашнехи сиплев е тĕрĕслев иртерме районти тĕп больницăна илсе тухатпăр. Паллах, çакă та меллĕ чирлĕ çыншăн. Лару-тăрăва кура хăшĕсене икĕ-виçĕ эрнелĕх е ытларах вăхăтлăх илсе килеççĕ, – паллаштарать кунти врач Р. Михайлова.



Услугăшăн пĕр талăкра 350 тенкĕ тӳлемелле, вĕсене хăш-пĕр эмелпе тӳлевсĕр тивĕçтереççĕ. Кунта вырнаçасси маларах чăрмавлă пулнă, черет кĕтме тивнĕ. Çынсен ыйтăвне тивĕçтерес тесе халĕ çакăн йышши уйрăм Турай больницинче те уçăлнă, çавна май вăрăм черет кĕтсе хăшкăлмалла мар.

Ыйту хыççăн ыйту çуралчĕ пухăннисен. Сиплев ĕçĕпе çыхăннисем юлашки вăхăтра ытларах та ытларах калаçтараççĕ çынсене. Тĕл пулăва районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов хутшăнма кăмăл тунăран кашни ыйту çине тивĕçлĕ хурав пулчĕ. Йӳçкасси тата Уйкас Янасал офисĕсенче шăл тухтăрĕ çукки чăрмавлă. Судпа медицина экспертизи тивĕçтерекен услуга кăткăслăхĕ (вилнĕ çынна касасси) чылайăшне хумхантарать. Республикăри пĕчĕк районсен больницисен шăпи те иккĕленӳллĕ, пирĕн район больници ку категорие кĕменни савăнтарать, паллах.

Çавăн пекех социаллă хӳтлĕх, социаллă пулăшу, пенси сфери тĕлĕшĕнчи ыйтусем çине те тивĕçлĕ хурав тупрĕç. Вĕсене асăннă органсен ертӳçисем ăнлантарчĕç.

– Ĕçе çапла шайра йĕркелени уйрăмах аслă çулхисене питĕ кирлине эпир тепĕр хут курса ĕнентĕмĕр. Малашне те çавăн пек тĕл пулусем йĕркелеме тăрăшăпăр. Çыннăн чуна тивекен кашни ыйтăвне ответлă ĕçчен илтме тата ун çине тивĕçлĕ хурав пама пултартăр, çавăн пекех пĕр-пĕринпе пĕрле ларса чуна уçса калаçни те пысăк пĕлтерĕшлĕ, – терĕ пенсионерсен пĕрлĕхĕн ертӳçи А. Скворцов.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Агрономсемпе инженерсен семинар-канашлăвĕнчен

# Çур аки хире чĕнет

Ытти çулсенче çурхи шывшур сассипе тулнă ака уйăхĕ кăçал çĕр ĕçченне шыв юхнипе хăратмарĕ. Ир-каç хальлĕхе сивĕ тăни тата хирсенче юр çукки хресчене çанталăк ăшăтнипе пĕрле ака-суха ĕçĕсем те алăкран шакканине систерет. Çĕр ĕçĕпе пурăнакан чăваш çынни çак вăхăта ака уйăхĕ тесе ыт ахальтен каламан ĕнтĕ: хĕл ыйхинчен вăраннă тĕнче çур акине хатĕрленет. Çулталăк тăрантаракан чи ответлă тапхăр тесе хаклать ăна çĕр ĕçченĕ. Хаклать те ир-каçа пăхмасăр çĕраннемĕр умĕнчи яваплăха туйса уй-хир ĕçĕсене хатĕрленет. Епле пырать-ха çак хатĕрленӳ кăçал? Çак ыйту çине тулли хурав парассипе иртнĕ кĕçнерни кун, ака уйăхĕн 10-мĕшĕнче, Е. Андреев яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăх тĕслĕхĕнче район администрацийĕн экономикăпа АПК аталанăвĕн пайĕ районти хуçалăхсен инженерĕсемпе агрономĕсен çур аки умĕнхи йăлана кĕнĕ семинар-канашлăвне ирттерчĕ.

Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ кăçалхи çур акине ытти çулхисенчен ответлăрах хатĕрленни кунти ĕçсемпе çывăхарах паллашсан курăнать. Пĕтĕмлетсе каласан хуçалăхра çурхи уй-хир ĕçĕсен планне туса хатĕрленĕ, унпа механизаторсене тата уй-хир ĕçченĕсене паллаштарнă, сĕрмелли-çунтармалли материалсем çителĕклĕ хатĕрленĕ, техникăна хире кăларма юсаса çитернĕ. Хуçалăх ертӳçи Виталий Семенов кун пирки çапла каларĕ:

– Çур акине пĕр-икĕ кун хушшинче хатĕрленсе çитме май çуккине эпир хамăр хуçалăхра пурте курса-пĕлсе тăратпăр. Çавăнпа та çак ĕçе эпир иртнĕ кĕркунне ял хуçалăх техникине управа лартассинчен пуçăнтăмăр. Çак ĕçе тирпейлĕ пурнăçланăран хăш техника хатĕрĕ валли мĕнле саппас пайсем кирлине эпир хĕле кĕричченех шута илтĕмĕр. Çапла вара улăштармалли пайсене йăлтах çĕнĕрен туянса хутăмăр. Иртнĕ кунсенче юсавçăсем вĕсене йăлтах майлаштарса тухрĕç. Ака вăрлăхне те çителĕклĕ янтăланине шута илсен эпир паян çур акине тухма хатĕр. Пирĕн тĕллев – акасуха ĕçĕсене кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерсе тухăç никĕсне хывса хăварасси. Ăна пурнăçлама ĕç ушкăнĕсем хатĕр. Вĕсем ĕç дисциплинине хăй еккипе ямасан пĕр йышра пулса çур акине те агротехникăпа пăхнă пек кĕске тапхăрта ирттерессе шанатăп.

Ӳсĕм çулĕ çине тăнă кооператив çур акине хатĕрленнипе паллашиччен Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи культурăпа кану центрĕнче семирар-канашлăвăн пленарлă пайĕ иртрĕ. Унăн ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тата республика шайĕпе ĕçлекен специалистсем активлă хутшăнни ĕçлĕ канашлăва тухăçлă йĕркелеме май пачĕ.

Ĕçлĕ тĕл пулăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев уçрĕ. Хăйĕн кĕске сăмахĕнче вăл кăçалхи çур аки районшăн уйрăмах пĕлтерĕшли çинче чарăнса тăчĕ.

– Кун тăршшĕ вăрăмланнă май çур акиччен вăхăт сахалрах та сахалрах. Хуçалăхсенче лару-тăру тĕрлĕрен пулнине курса тăратпăр. Çур акине хатĕрленессипе республика шайĕнчи лару-тăру пире хальлĕхе савăнтарсах каймасть. Анчах çакă çур аки пахалăхĕ çине витĕм кӳмелле мар. Мĕншĕн тесен юлнă кунсенче пурнăçламалли ĕçсем çакăнта ырă улшăнусем кĕртме май парасса куратпăр. Пирĕн çакăнпа усă курмалла. Юлашки çулсенче ял хуçалăх продукцийĕ туса илесси каялла утăмланине чарса лартасси шăпах çур акирен пуçланать. Унран пĕлтерĕшлĕрехххи пирĕн çĕр ĕçченĕшĕн халĕ пулмалла та мар. Çавăнпа та паян пирĕн çур акине хатĕрленессипе юлнă кашни ĕç çине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Кĕр çитсен вара вăхăтра пурнăçламан ĕçсемшĕн пит хĕретмелле ан пултăр, – терĕ семинар-канашлури ĕçлĕ калаçусен никĕсне палăртса район администрацийĕн пуçлăхĕ.

Кăçалхи çур акире пурнăçламалли ĕçсен планĕпе пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ–экономикăпа АПК аталанăвĕн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертӳçи В. Ананьев паллаштарчĕ. Ĕçсен калăпăшĕ вара пĕчĕк мар. Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсен агротехникăна пăхăнса кĕске вăхăтра çурхи тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене пурĕ 11,2 пин гектар, пĕр çул ӳсекен курăксене 1509 гектар, кукурузăна 316 гектар çинче акса хăвармалла. Кунпа пĕрлех вăхăчĕпе усă курса 482 гектар çĕр улми тата 28 гектар пахча çимĕç лартмалла. 4881 гектар çинчи кĕрхи культурăсемпе 5200 гектар йышăнакан нумай çул ӳсекен курăксен пуссисене сӳрелесе нӳрĕк тытса хăварасси тата вĕсене минераллă удобренисемпе апатлантарасси те – çурхи ака-сухара туса ирттермелли ĕçсем.

Ума лартнă тĕллевсене кирлĕ пек пурнăçлассинче вăрлăх пахалăхĕ тĕп вырăнта пулнине хресчен ăнланатех ĕнтĕ. Çавăнпа та семинар-канашлура «Россельхозцентр» филиалăн районти уйрăмĕн ертӳçи А. Павлов вăрлăх пахалăхĕ пирки калани кашниншĕнех вырăнлă пулчĕ теес килет. Канашлу ирттернĕ кун тĕлне районти хуçалăхсем ака валли кирлĕ вăрлăха пĕтĕмпех (2966 тонна) тĕрĕслеттернĕ. 2194 тонни çеç (74 проценчĕ) ака кондицине тивĕçтерни вара шухăшлаттарать. Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис., Ильич яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе А. Трепневăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче ака вăрлăхĕ пĕтĕмпех кондициллĕ пулни тĕслĕх илмеллисем хамăр хушăрах пуррине çирĕплетет.

Çур аки ирттерме минераллă удобрени те, ӳсен-тăран хӳтĕлемелли им-çам та, дизель топливипе бензин та паян çителĕклĕ мар. Анчах хуçалăх ертӳçисем кунта татса памалла мар ыйтусем çукки пирки калаçни шанчăк çуратрĕ.

Уйрăм сăмах хирте ĕçлекен ял хуçалăх техники тĕлĕшпе. Патшалăх техника надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ С. Николаев сăмахĕнчен ума çакнашкал ӳкерчĕк тухрĕ. Асăннă кун тĕлне хире тухмалли тракторсен, сеялкăсемпе плугсен, культиваторсен ытларах пайĕ ĕçе хатĕр пулнă. Çавăнпа та Сергей Александрович уяр кунпа туллин усă курса акана тухиччен техникăна юсавлисен ретне лартма тăрăшма, тракторсене техосмотр тăратассипе тимлесе ĕçлеме ыйтрĕ.

Семинар-канашлура çур акине хатĕрленессипе ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулакансене те, ыранхи кун çине пӳрне витĕр пăхакансене те итлерĕç. Кун йĕркине çĕнĕлĕхсемпе паллашассине те кĕртрĕç.

Çĕнĕлĕх тенĕрен. Ĕçлĕ калаçу пуçăниччен хуçалăхсен ертӳçисемпе агрономĕсем тата инженерĕсем вăрлăх аласа хатĕрлемелли çĕнĕ техникăпа паллашрĕç.

Ĕçлесен пурăнма та, аталанма та пулатех. Инженерсемпе агрономсен семинарканашлăвĕ пĕлтĕрхи кăтартусене тĕпе хурса 2014 çул валли ĕç планĕ йышăнчĕ.

**А. БЕЛОВ.**



В. Горбунов фермер сĕнĕвĕсем канашлăва хутшăннисемшĕн интереслĕ пулчĕç.



Ĕçе хатĕр техника çине пăхма кăмăллă. Вăл çурхи ака-сухара чăхăмламасăр ĕçлесси пирки иккĕленӳ çук.

Ултав çулĕ – шуçлак çул

# Судăн уçă ларăвĕ

Апрелĕн 10-мĕшĕнче Муркаш районĕн судĕнче судăн уçă ларăвĕ пулчĕ. Унăн ĕçне асăннă орган председателĕ Эльза Тарасова ертсе пычĕ. Суд ларăвне çак мелпе ирттернĕрен Муркаш шкулĕн 11-мĕш класс, вăл шутра кадет класĕн ачисем хутшăнчĕç, çавăн пекех тĕрлĕ орган ертӳçисемпе представителĕсем пулчĕç.

Суд ларăвĕнче пĕр преступлени тĕлĕшпе пуçарнă материала пăхса тухрĕç. Ку ĕçĕн патшалăх айăплавçи район прокурорĕ Сергей Павлов пулчĕ. Муркаш ял тăрăхĕнчи пĕр ялти çамрăк хĕрарăм кану каçĕнче пулнă, хайхискер ют çын пурлăхне хапсăнма тĕллев тытнă. Кĕçĕн çулхи ача амăшĕ пĕлĕш хĕрарăм сумкинчен куçне вĕçертмен, пĕлнĕ тейĕн унта укçа сахал мар пулнине. Меллĕ самант суйласа илсе сумкăран çичĕ пин ытла тенкĕ укça кăларса илнĕ.

Каярах вара хĕрарăм ĕç-пуç шала кайнине сиснĕ, укçана унăн хуçине каялла тавăрса панă. Вăл усал ĕç тума именмен-ха, анчах та пĕлĕшĕнчен суд ларăвĕччен каçару ыйтма вăйхал çитереймен. Пысăк йыш умĕнче меллех мар, паллах, çапах та, чунтанах мар пулин те, каçару ыйтрĕ. Ултав çулĕ чăннипех те питĕ шуçлакки пирки малтанах шухăшланă пулсан çак кун унăн ыттисем умĕнче пит хĕретмелле пулмĕччĕ.

Çапла вара суд преступлени çулĕ çине тăма ĕлкĕрнĕ хĕрарăмăн кĕçĕн çулхи ача пуррине, вăл преступлени тунине йышăннине, унччен судпа айăпланманнине тата хăш-пĕр саманта шута илчĕ. Ăна штраф укçи тӳлеттермелле турĕç, паллах, сиен кӳнĕ калăпăшран самай пысăк. Çапла вара судăн уçă ларăвне хутшăнакансем çак ĕç епле пынине тата преступлени тунă çынна никам та пуçран шăлманнине курса ĕненчĕç.

– Район сучĕ Фемидăна тухăçлă та тĕрĕс тивĕçтерессишĕн ĕçлет. Гражданс ен саккунлă прависемпе интересĕсене тивĕçлĕ шайра хӳтĕлессишĕн, суд тĕрĕслĕхĕпе тивĕçтерессишĕн, судсен ĕçĕ пирки уçăмлă информаци тăратассишĕн тăрăшать. Юлашки çулсенче суд тĕрĕслĕхне тивĕçтерессин принципĕсем улшăнчĕç, суд полномочийĕ те самай сарăлчĕ, обществăра та вĕсен пĕлтерĕшĕ чылай хăпарчĕ, унпа пĕрлех общество суд ĕçĕ-хĕлĕнчен ытларах та ыйтма пуçларĕ. Çакă кулленхи ĕçре суд ĕçченĕсенчен, суд аппаратĕнчен пысăк профессилĕх, кашни ĕç патне тимлĕх те ответлăх туйма ыйтать. Муркаш район сучĕн судйисем тата суд аппарачĕн ĕçченĕсем çак ответлăха туйса вăй хураççĕ. Суд аталанăвĕ Раççей суд системин историйĕнче, унăн реформи çинче, Раççей патшалăх влаçĕн никама пăхăнман тата хăй тĕллĕн вăйра тăракан института куçнинче курăнать. Уголовлă ĕçсене пăхса тухнă чухне кашни ĕçе пахалăхлă та вăхăтра тишкересси çине пысăк тимлĕх уйăратпăр, уйрăмах айăпланă çын тĕлĕшпе сыхлăх мелĕ йышăннă пулсан. Айăплав факчĕсене çирĕплетмелле, айăплава саккунлă та тĕрĕс йышăнмалла, çапла вара айăпсăрри айăплă ан пултăр, йĕркене пăсни айăплавсăр ан юлтăр. Уголовлă ĕçсене пăхса тухнă чухнехи суд тĕллевĕ пирки калаçнă чухне гражданинăн конституциллĕ правипе ирĕклĕхне хӳтĕлессине шута илетпĕр, – терĕ Эльза Леонидовна суд ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă май.

Асăннă ĕçе хутшăнакансемшĕн прокуратура органĕ пирки каланă информаци те питĕ кăсăклă пулчĕ.

– Прокуратура çинче те ответлăх çав тери пысăк, тăван районăмăрти лăпкă лару-тăру сирĕнтен нумай килет. Ахальтен мар ĕнтĕ обществăри саккунлăхпа йĕркелĕхе прокуратура гарантиленине пĕлсе шанса тăратпăр. I Петĕр патшан Раççей прокуратури пирки калакан 1722 çулхи январьти Указĕ Указĕ кун çути курнăранпа асăннă орган «патша куçĕ» статуса тивĕçлĕ шайра тытса тăрать, – кун йĕркинчи ыйтăва малалла тăсрĕ район прокурорĕ Сергей Владимирович.

Çавăн пекех район нотариусĕ Павел Шлаев, республикăри адвокатсен Муркашри филиалĕн ертӳçи Владимир Иванов тата ыттисем каларĕç.

Шкул ачисен ыйту хыççăн ыйту çуралчĕ, кашнин çине тивĕçлĕ хурав пулчĕ.



**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

«Моргаушская» МСО 55 çул тултарчĕ

# В. СЕМЕНОВ: «Ырра шанса çурт-йĕр тăватпăр»

***Ыранхи кунпа пурăнакан çурт-йĕр тăвакана яланах хисепленĕ, малашне те вăл ăна ырă çеç сунĕ. Строитель – мирлĕ ĕç. Çакна хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕнче кун йĕркинчен кăлармаççĕ. Асăннă коллектив районта строительство енĕпе вăй хуракан тăнăç предприятисенчен пĕри. Кăçал районăмăр 70 çул тултарнипе пĕрлех асăннă организаци те хăйĕн черетлĕ юбилейне паллă тăвать. Ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ йĕркеленнĕренпе 55 çул çитрĕ. Районăн социаллă аталанăвне пысăк тӳпе хывакан коллектившăн ку вăл ĕçлеме хăнăхса çитнĕ ӳсĕм. Çавăнпа та алă усса лармаççĕ кунта, историн кашни страницине ĕçпе çырса пыраççĕ, çĕр-шыв лартнă тĕллевсене, РФ Президенчĕпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ палăртнă программăсене пурнăçлассипе çанă тавăрса ĕçлеççĕ.***

***Организаци хăй çамрăккине кура кунта вăй хуракансем те ытларах ĕç ӳсĕмĕнчи çынсем. Вĕсен вăтам ӳсĕмĕ – 39 çул. Пĕрлехи тăрăшулăхпа кунти ĕçченсем çитес кунсенче Муркашри Парк урамĕнче 5 хутлă çурт никĕсĕ яма хатĕрленеççĕ, Москакассинче 3 хутлă çурта графикпа палăртнинчен маларах ĕçе кĕртессипе тимлеççĕ. Çакнашкал хĕрӳ ĕçре кĕтсе илеççĕ кунти строительсем хăйсен юбилейне. Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн çуралнă кунĕ умĕн акционерсен хупă обществин генеральнăй директорĕпе, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕпе Владислав СЕМЕНОВПА тĕл пулса калаçрăм, ертӳçĕ район аталанăвĕ çине епле пăхнипе интереслентĕм.***



Строительсем тепĕр çурт никĕсне ячĕç.

**– Владислав Николаевич, хăвăрт аталанакан пурнăçра пурăнатпăр та сирĕн организаци 55 çул тултарнине те çамрăк вăхăт тесе хаклассăм килет. Район 70 çул тултарнипе пăхсан вăл унăн шăллĕ пек çеç пулса тухать.**

– Тĕрĕс танлаштару турăр. Эпир пурсăмăр та пĕр çемьере, пĕрле вăй хунипе ырра шанса пĕр çурт тăватпăр. Муркаш ен илемлĕ те хăтлă пуласси çак хутшăнура пурсăмăр та пĕр тĕллевлĕ ĕçленипе çыхăннă. Аталану çулĕпе пыракан пирĕн коллектив Муркаш районне, Чăваш Ене Раççей Федерацийĕн мал туртăмлă утăмĕсенчен хăварас шутлă мар. Çĕр-шывра Раççей Президенчĕн программине пурнăçлассишĕн тăрăшса Федерацин «Пурăнмалли çурт-йĕр» тĕллевлĕ программи унăн «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» подпрограмми, «Ялсене социаллă аталантарасси» программа тĕллевлĕ ĕçлеççĕ. Çак ырă тĕллевсене пурнăçа кĕртессипе мал туртăмлă ĕçсем, тĕпрен илсен, йăлтах хамăртан килнине шута хурса эпир ĕçсене пахалăхлă пурнăçлама тăрăшатпăр.

**– Муркаш район аталанăвĕшĕн эсир ответлăха туйни – ырă пулăм. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ пулнă май хăвăра шанса панă строительство организацийĕпе район аталанăвĕ хушшинчи çыхăну епле пулса пыни пирки каласа памăр-ши?**

– Район аталанăвĕ вăл пĕр-икĕ çын ĕçленипе пулмасть. Çакна ăнланса район администрацийĕ, унăн пуçлăхĕ Р. Тимофеев пирĕн ĕçе çул парсах пыраççĕ, май пур чухлĕ пулăшаççĕ. Тĕрĕссипе ĕçĕсем пирĕн тĕрлĕрен, анчах тĕллевĕ пĕрре: района малалла аталантарасси. Хама депутатсен районти Пухăвĕн депутатне суйланă май манăн халăх шанăçне тӳрре кăларас килет. Çавăнпа та хам ку таранччен пухнă опытпа «Моргаушская» строительство организацийĕн аталанăвĕшĕн усă куратăп. Анчах ку вăл пĕччен пурнăçламалли ĕç мар. Çавăнпа та май килнипе усă курса умри тĕллевсене пурнăçа кĕртессипе вăй хуракан ĕçтешсене, пирĕнпе çыхăнса ĕçлекенсене, эпир тунă çурт-йĕрпе усă куракансене тата хамăр ветерансене акционерсен «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă обществи 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатăп. Паян пирĕн патăмăрта вăй хуракансем ялсен инфраструктурине аталантарассинче, çынсен социаллă пурнăçне лайăхлатассинче малашне татах та тăрăшарах ĕçлессе, пирĕн çурт-йĕре пурăнма куçакансем вара хваттерсен хăтлăхĕ пирки пĕртте пăшăрханмасса шанатăп. Умри тĕллевсем пирĕн пĕрлехисем пулччăр та вăсем кĕске вăхăтра пурнăçланччăр. Çакна валли сирĕн пурсăрăн та сывлăх çирĕп, ĕçлес кăмăл тулăх пултăр.

**– Пирĕн калаçу строительство организацийĕн историйĕ таврах çаврăнать. Хăвăр общество 55 çул тултарнă май пирĕн вулакансене те акционерсен «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă обществи утса тухнă çулйĕрпе паллаштармăр-ши?**

– Хаваспах. Историе пĕлекенĕн малашлăхĕ те пур теççĕ. Эпир те хамăр утса иртнĕ çул-йĕре тĕпчесе паллă тусах пыратпăр. Общество аталанăвĕн пĕр кунне те манăça хăварас мар тетпĕр. Истори вара пирĕн пуян. Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн малтанхи утăмĕсем 1959 çулăн ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче йĕр тăваççĕ. Шăпах çавăн чух «Броневик», «Новая Юнга», Чкалов ячĕпе хисепленекен, «Заря», 1905 çулхи революци ячĕпе хисепленекен колхозсен укçи-тенкипе хуçалăхсем хушшинчи строительство материалĕсем хатĕрлекен «Заря коммунизма» завод ĕçлеме пуçлать. Ăна малтанхи çулсенче Аркадий Петрович Ягодкин ертсе пырать. Тăватă çул хушшинче пысăк калăпăшлă ĕçсем пурнăçласа пулас предприятин çирĕп никĕсне хывса хăварать вăл. Нумай шыв юхса иртрĕ унтанпа. Çулсем иртнĕ май çĕнĕ завод та аталанса, ĕç калăпăшне анлăлатса, хăйĕн пĕлтерĕшне ӳстерсе пынă.

1963 çулхи пуш уйăхĕнче завод никĕсĕ çинче Юнкăри хуçалăхсем хушшинчи строительство организацийĕ йĕркеленет. 1965 çулхи нарăс уйăхĕнче вак организацисене пĕрлештернĕ хыççăн хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ хăйĕн ĕç пурнăçне тытăнать. Предприяти аталанăвне 1976–1999 çулсенче Николай Александрович Гусак пысăк тӳпе хывать. Шăпах вăл ертсе пынă çулсенче организаци республикăри яллă вырăнти строительство организацийĕсем хушшинче чи лайăххисен шутне кĕрет. Н. Гусак ĕçленĕ çулсенче предприяти районта строительство тĕлĕшпе пысăк ĕçсем пурнăçлать: пурăнмалли çуртсем çĕкленеççĕ, ача сачĕсем ачасене йышăнаççĕ, çĕнĕ шкулсем алăкĕсене уçаççĕ, выльăх фермисем çĕнелсе аталанаççĕ, ял хуçалăх техники çĕнелнĕ мехпарксенче вырăн тупать.

Аслă ăрури ĕçтешĕсен ырă пуçарăвне строительсем иртнĕ истори тапхăрĕнче пĕр самант та алăран вĕçертмен. Тĕрлĕ çулсенчи ертӳçĕсем пĕлсе ертсе пынипе пĕрре тĕрĕс çул суйласа илнĕ строительсем йывăр вăхăтра та шаннă ĕçе хăй еккипе яман. Çак организаци тимленипе тата тăрăшнипе юлашки çулсенче пурăнмалли нумай хваттерлĕ çуртсем тăтăшах хута кайрĕç, капиталлă юсав ĕçĕсем нумай пурнăçланчĕç. Çавна май çамрăк çемьесем, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин участникĕсем хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене саккунпа килĕшӳллĕн лайăхлатма май тупрĕç.

**– Эсир каланине хирĕçлеме çук. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх истори анлăшĕнче сирĕн коллективра ĕçре мал туртăмлăхпа палăрнă ĕçченсемпе специалистсем те чылай. Уявра вĕсене ятран палăртма шухăш çук-и?**

– Ĕçлекен çын чăнах та чыс-сума тивĕç. Ун умĕнче пирĕн пуç таймалла. Акционерсен «Моргаушская» МСО» хупă обществинче те çавнашкал хастарсем пĕрре-иккĕ мар. Пирĕн патăмăрта ĕçленĕ тата паян та кунта вăй хуракан 8 строитель «Нечерноземагропромстройăн хисеплĕ строителĕ», 3-ĕн «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ», пĕр çын «Тава тивĕçлĕ механизатор» ятсене, пĕр штукатур-маляр «За преобразование нечерноземья РСФСР» медале, иккĕн «Хисеп палли», иккĕн «Ĕç мухтавĕн» 3-мĕш степень орденĕсене, 21 строитель тава тивĕçлĕ ĕçпе Раççей шайĕнчи тата Республикăри влаç органĕсен Хисеп грамотисене тивĕçрĕ. Ятпа асăнсан кирпĕч хуракансен бригадирĕнче 43 çул ĕçленĕ Г. Петрова, П. Аргандеев автокрановщика, А. Аргандеева çĕвĕçе, В. Сюльдеркин водителе, Г. Сюльдеркина кирпĕч хуракана, Г. Пшановпа А. Суворов водительсене ырă сăмахпа палăртмасăр иртейместĕп. Аслисенчен çамрăксем тĕслĕх илеççĕ. Кирпĕч хуракансен бригадирĕ В. Иванов, ПТО пуçлăхĕ А. Суворов, Е. Васильев СМР мастерĕ хăйсен пултарулăхĕпе малашлăха пăхтараççĕ. Аслисен ырă тĕслĕхĕпе паянхи ĕçченсен тăрăшулăхĕ тата хваттер илекен çынсен пурнăç шайĕ çĕнĕ ӳсĕме çĕкленни пурсăмăра та строительствăра çĕнĕлĕхсене алла илсе ĕçлеме ыйтать. Эпир çапла тăватпăр та.

**– Конкретлăрах каласан...**

– Пытармалли нимĕн те çук. Пирĕн организаци тăвакан хваттерсем Чăваш Республикипе те чи йӳннисем шутĕнче. Тӳлевре тĕрлĕ мелсемпе усă курма пулать. Анчах çакă вăл пахалăх пĕчĕккине пĕлтермест. Эпир строительство нормисене пăхăнса кирпĕч çуртсем çеç çĕклетпĕр. Пурнăç ыйтăвĕсене шута илсе тата ыррине мала тăратса хваттерсене хăйсене тĕллĕн хутса ăшăтмалла тăватпăр. Çакна валли хваттерсене Италире кăларнă «Бакси» газ кăмакисем, чугун вырăнне алюмини радиаторсем вырнаçтаратпăр. Хваттерсенче çынсене кăмăллă та хăтлă пултăр тесе хваттерсен тĕрлĕ калăпăшĕпе ĕçлетпĕр. Хваттерсен хăтлăхне малти вырăна кăларатпăр.

**– Сирĕн калаçуран эсир çĕннине алла илессишĕн тăрăшни курăнать. Çавна май умри плансемпе паллаштараймăр-ши?**

– Ку, паллах, организаци вăрттăнлăхĕ пулсан та уявра хамăрăн ĕçлекенсене тата пирĕн пулăшупа усă куракансене умри тĕллевсемпе паллаштарни те йăнăш пулмĕ. Акционерсен «Моргаушская» МСО» хупă обществи пурăнать, малалла пăхса ĕçлет, хăйĕнпе ĕçлекенсене шанчăк çеç кӳрет. Çакна валли пирĕн туслă команда йĕркеленсе çитрĕ ĕнтĕ. Унăн ĕç кăтартăвĕсем те хам ĕçлеме пуçланăранпа (2007 çултан пуçласа) палăрмаллах ӳсрĕç. Çынсем çакна ăнланаççĕ тата халăх пирĕн пата килет пулсан – ĕç пулать, ĕç пулсан – предприяти аталанать, район тепĕр утăм малалла утăмлать. Ку вара район бюджетне налуксем тӳлессине те ӳстерет. Çакă – пĕрлехи пурнăç çĕнĕ шая çĕкленессин никĕсĕ. Куратăр пулĕ, ырă ĕç çумне ырри хушăнсан паха пурнăç ума тухсах пырать. Апла пулсан пирĕн хамăрăн та аталану çулĕнчен юлмалли çук.

**– Владислав Николаевич, мал туртăмлă ĕçпе пĕрлех спорт енĕпе те сирĕн строительсем районта ырă ятлă. Кун пирки мĕн калайратăр?**

– Спортпа туслисем валли иртнĕ çулсенче спорт залне капиталлă юсаса хута ятăмăр. Халĕ пирĕн спортсменсем район шайĕнчи ăмăртусенче палăрнишĕн савăнатпăр çеç. Спорт тенĕрен. Эпир хамăр патăмăрта çулленех Н. Гусак парнисене тивĕçессишĕн волейбол вăййисем ирттеретпĕр. Кăçал та вĕсем пирĕн патăмăрта ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче 10 сехетре пуçланĕç. Унта пурне те чĕнетпĕр тата кĕтетпĕр. Маттуррисене вара кубокпа медальсемсĕр тата дипломсемсĕр пуçне хаклă парнесемпе те чыслăпăр. Çак парнене уйрăм вылякансем те тивĕçĕç. Уяв пуриншĕн те уяв пек пултăр!

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**



Муркашри Парк урамĕнчи çĕнĕ çуртсем.

Район 70 çул тултарнă май

# Çыхăнусăр малашлăх çук



1944 çулта Муркаш районне йĕркеленĕ хыççăн парти, совет органĕсене, производство тата ял хуçалăх предприятийĕсене çыхăнса ĕçлеме чи малтанах телефон çыхăнăвĕпе çыхăнтарасси чи пĕрремĕш задачăсем шутне тухса тăнă.

Малтанхи çулсенче телефон çыхăнăвне юпасем тăрăх каякан çыхăну линийĕсемпе тивĕçтернĕ. Кайрантарах вара ку тĕллевпе çыхăнăвăн алăпа çыхăнтармалли телефон коммутаторĕсемпе усă курма пуçланă. Тĕп коммутатор Муркашра, ыттисем Мăн Сĕнтĕрте, Йӳçкассинче, Чуманкассинче, Ярославкăра пулнă. Абонентсене пĕр-пĕринпе икĕ пралуклă линисемпе телефонисткăсем сыпăнтарнă.

Ял çыннисене тĕрлĕ информацисене тата хыпарсене пĕлтерсе тăма пралук карса радио линийĕсем йĕркелесси анлă сарăлса пынă. Хыпарсене пĕлтерсе тăракан вырăнти студисем чи малтанах Муркашра, Мăн Сĕнтĕрте, хăш-пĕр колхозсенче ĕçлеме тытăннă.

1969 çулта Муркашпа Мăн Сĕнтĕре сыпăнтаракан участокра пăхăр пралуклă МКСАП 1х4х1,2 маркăллă кабель çĕр айĕпе хурса çыхăну йĕркеленĕ, частота уплотненийĕн КНК-6 икĕ аппаратурине вырнаçтарнă. 1970-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вара алăпа çыхăнтармалли телефон коммутаторĕсене координат системин автоматлă телефон станцийĕсемпе (АТСК) улăштарма тытăннă.

1972 çулта «Дружба» (Ярапайкасси), «Герой» (Шурча), «Свобода» (Çатракасси) колхозсенче шалти производство телефон çыхăнăвĕн (ВПТС) станцийĕсене тума пуçăннă. Ку ĕçсене вĕсем хăйсен укçи-тенкипе пурнăçланă. 10 çул хушшинче пур ял хуçалăх предприятийĕсем те хăйсен вырăнти радиоузелĕсене хута янă.

1976 – 1977 çулсенче район центрĕнче çыхăну сооруженийĕсене реконструкцилес ĕçсем сарăлнă. 1000 номерлĕ АТСК 100Ӳ 2000 телефон станцийĕ вырнаçтарса телефон канализацийĕ хута янă. Çакă районти телефон çыхăнăвне аталантарма май паракан пысăк утăм пулса тăнă.

Муркаш районĕнчи телефон çыхăнăвĕн аталанăвĕн палăрăмлă çĕнĕ шайĕ 2005 çулпа çыхăннă. Çав çул район центрĕнче Раççейре туса кăларнă АЛС-4096С маркăллă çĕнĕ цифра коммутаторĕ вырнаçтарнă. Çав çулах ялсенчи АТС-сенче те цифра мелĕпе ĕçлекен çыхăну оборудованийĕ вырнаçтарма пуçăннă. Çакă тĕп АТС-па тата хулапа çыхăнма май панă, çыхăнăвăн пахалăх шайĕ палăрмаллах ӳснĕ. Çулталăк хушшинче Йӳçкассинче, Орининта координат АТС-ĕсене цифрăллисемпе улăштарнă, Матьăкра, Панклире, Атапайра, Мулкачкассинче тĕп коммутатор (АЛС-4096С) йышши çĕнĕ АТС-сем хута янă. Вĕсене çыхăнăвăн пăхăр кабельне хурса хăварса сыпăнтарнă, вĕçĕнчи станцисенче ОПМ-30 тата ОЛТ маркăллă çĕнĕ цифра аппаратури вырнаçтарнă. Шупашкарпа Муркаш хушшинче çыхăнăвăн çĕнĕ оптика кабельне хунă.

Çакăн хыççăн хуласем, çĕр-шывсем хушшинчи çыхăну тата телеграф пахалăхĕ чылай лайăхланчĕ. Даннăйсене ярса памалли аппаратура, Интернет пурнăça кĕчĕç. Предприятисемпе организацисенче тата ял çыннисем хушшинче компьютерсем анлă çул тупрĕç. Çынсем электрон почтипе усă курма, скайп мелĕпе хутшăнма тытăнчĕç.

Республикипе чи малтанхисенчен пĕри 2006 çулхи июнь – ноябрь уйăхĕсенче районти пур шкулсене те компьютерсемпе çыхăнтарас тата Интернетăн анлă йăрăмлă мелĕпе çыхăнма май туса парас енĕпе çине тăрса ĕçлерĕмĕр. 2006 çултах ноябрь уйăхĕнче Çатракассинчи АТС-ра ялсенче пĕрремĕш хут Интернетăн анлă йăрăмлă мелĕпе çыхăнмалли DSLAM аппаратурине вырнаçтартăмăр. 2007 çулта Муркашри çыхăну цехĕн коллективĕ ялсенчи АТС-сенчи оборудованисене çĕннисемпе улăштарас ĕçсене малалла туса пычĕ. Çапла вара 2008 çулта районти юлашки 24-мĕш АТС хута кайрĕ.

2008 çул вĕçĕнчен тытăнса 2009 çул пуçламăшĕччен акционерсен «Волгателеком» обществи ертсе пынипе Муркашри 150 тăваткал метр лаптăк йышăнакан цифра çыхăнăвĕн аппаратурине татах çĕнĕреххипе, пĕтĕмпе те 20 тăваткал метр лаптăк йышăнаканнипе улăштартăмăр. Автоматла режимпа ĕçлекен аппаратурăна пăхса тăракан та кирлех мар.

Универсаллă услугăсене пурнăça кĕртессипе Правительство йышăннă программăпа килĕшӳллĕн 2007 çул пуçламăшĕнче районти кашни ялтах таксофонсем вырнаçтарассипе çине тăрса ĕçлеме тытăнтăмăр. Ку ĕçе кĕске вăхăтра пурнăçлама пултартăмăр.

Координат АТС-ĕсене улăштарас ĕçсене вĕçленĕ хыççăн 2010 çулхи август уйăхĕнче Муркаш – Мăн Сĕнтĕр линипе çыхăнăвăн пăхăр кабелĕ çинчен оптика кабелĕ çине куçма май килчĕ. Çавна май çыхăнăвăн Оптик-NGE-160G аппаратурипе усă курма пуçăнтăмăр. Вăл Интернет тата телефон çыхăнăвĕ валли 1 ГГб юхăм (поток) яма май пачĕ. Çакă Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансен район центрĕпе тата хулапа хальхи çыхăну мелĕпе çыхăнассин ыйтăвне татса пачĕ, Интернета тухассин хăвăртлăхне ӳстерчĕ, телевидени каналĕсене пăхасси те лайăхланчĕ.

Май килнипе усă курса 2011 – 2012 çулсенче Москакассинчи, Оринипти тата Çатракассинчи АТС-сене те оптика аппаратури çине куçартăмăр. Интернета тухассин хăвăртлăхĕ ӳсрĕ, нумай каналлă телевидение пăхма та майсем пулса тăчĕç.

2012 çулхи çуркунне район центрĕнче оптикăна киле çитерессипе (FTTX – Интернет тата телевидени) ĕçсем пуçăнчĕç. Муркашра пурăнакансем валли Октябре 50 çул, Гагарин, Мир, Чапаев тата Заводская урамсенче оптика кабельне 4 ункă хурса хăварнă. Пĕрремĕш абонента 2012 çулхи майăн 17-мĕшĕнче сыпăнтарнă. Район администрацийĕ, районти шалти ĕçсен пайĕ, райпо, район сучĕ, бизнес-инкубатор, пушар чаçĕ, районти тĕп больница валли оптика кабелĕсене икшер хывнă. 2013 çул вĕçĕнче çыхăнăвăн оптика кабельне Мăн Шаптакри АТС-а çитертĕмĕр.

Хальхи вăхăтра 250 çынран кая мар пурăнакан пур ялсене те оптика çыхăнăвне çитерес задача тăрать. Çакă вăл пĕтĕмпех бухгалтери учечĕн ĕçне централизацилеме, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, предприятисенче экономика пĕлтерĕшлĕ йышăнусене хăвăрт тума, ĕç вырăнĕнчен тухмасăрах калаçусем, видеоконференцисем ирттерме май парать.

**Сăн ӳкерчĕкре: 1972 çул. Муркашри çыхăну цехĕн ĕçченĕсем субботник хыççăн çыхăну цехĕн кивĕ çурчĕ умĕнче.**

**В. РЫЖКОВ,**
**Муркашри çыхăну цехĕн электроçыхăнăвăн 1-мĕш категори инженерĕ.**

Çĕр ыйтăвĕ тавра

# Тĕллевлĕ усă курмалла

Чăваш Республикин Росреестр управленийĕн ĕçченĕсем çĕрпе тĕллевлĕ усă курман, вăл шутра унăн уйрăм категорийĕсемпе килĕшсе тăман ĕçсем пурнăçланă фактсене тупассипе малалла тимлеççĕ. Асăннă орган çапла пĕлтерчĕ. Шупашкар хулин çĕрĕ тĕрлĕ зонăран тăрать, çавна май кашни зонăн тĕп тата условлă ирĕк илнĕ тĕсĕ пур. Тĕслĕхрен, транспорт магистралĕ çывăхĕнче обществăлла активлă ĕç-хĕл йĕркелеме ирĕк паракан зона пур. Çак территорире мунчапа сывлăх сыхлавĕн комплексне ятарлă килĕшӳпе кăна çĕклеме юрать, ку ĕçе йĕркелесси условлă ирĕк илнĕ категорие кĕрет.

Чăваш Республикин Росреестр управленийĕн инспекторĕсем юридици сăпачĕ тĕлĕшпе тĕрĕслев ирттернĕ, çавна май Шупашкар хулин Б. Хмельницкий урамĕнчи 65 çурта çитнĕ. Асăннă вырăнти çĕр лаптăкĕ икĕ хутлă çурт (пурăнмалли çурт-йĕр мар) валли пулнă. Ку лаптăк çинче мунчапа сывлăх сыхлавĕн комплексне вырнаçтарнă. Юнашарти çĕр лаптăкне индивидуаллă предпринимателе арендăна панă, ун çинче мунчан уйрăм çуртне тунă. Çакăн йышши заведенисене тăвассине йĕркелес пулсан ятарлă килĕшӳ тумалла, халăхпа сӳтсе явмалла тата ытти те. Росреестр ĕçченĕсем юридици сăпатне тата индивидуаллă предпринимателе йĕркене пăснăшăн административлă явап тыттарнă. Юридици сăпатне 40 пин тенкĕлĕх, индивидуаллă предпринимателе 2000 тенкĕлĕх штраф тӳлеттерме йышăннă.

Чăваш Республикин Росреестр управленийĕ çакăн йышши факт пирки ( тел.: 62-08-22, www.to21.rosreestr.ru ) пĕлтерме ыйтать.

Следстви комитетĕнчен

# Çара каяссинчен пăрăнсан

РФ Конституцийĕн 59 статйи çĕр-шыва хӳтĕлесси арçыннăн чыслă тивĕçĕ пулнине çирĕплетет, çар ĕçĕ федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн пурнăçланать. Çак ответлăхран пăрăнакансем тĕлĕшпе чи çирĕп айăплав – икĕ çуллăх ирĕкрен хăтарассине, 200 пин тенкĕ таран штрафлассине, икĕ çул таран ирĕксĕрлесе ĕçлеттерессине – пăхса хунă.

Етĕрнери районсем хушшинчи следстви комитечĕ пĕлтернĕ тăрăх Чăваш Енре çар ретне тăрассинчен пăрăнакансем тĕлĕшпе уголовлă 25 ĕç пуçарнă (2012 çулта – 14 ĕç, 2011 çулта – 38 ĕç). Çулталăк пуçланнăранпа 12 ĕç пуçарнă та ĕнтĕ (иртнĕ çулхи çак тапхăрта – 8 ĕç).

Хăшĕ-пĕри, çар ретне тăма юрăхлă пулин те, чĕннĕ вăхăтра çар комиссариатне васкамасть. Ун йышшисене вара çирĕп явап кĕтет, штраф калăпăшĕ тĕрлĕрен, 10 пинрен пуçласа 120 пин тенкĕ таранах. 2013 çулта ку тĕлĕшпе саккуна пăхăнманнисене штрафланă укçа-тенкĕ калăпăшĕ 1 миллионран та иртнĕ.

Унччеихи фактсене тишкернинчен çакă курăнать, арçыннăн çар тивĕçне пурнăçлассинчен пăрăнакансен ытларах пайĕ ялта пурăнать, яланлăх ĕç вырăнĕ çук. Саккуна хирĕçлессин тĕп сăлтавĕ – çар ĕçне пурнăçлас килменни. Штраф тӳлеменни вара çирĕпрех айăплава çаврăнса тухма пултарать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

«Вăрçă ачисем» ярăмран

# Пурнăç пархатарĕ

(Очерк)

**Ытла та хăвăрт иртетçке вăхăт. Муркашра пурăнакан Василий Федорович Федоров 20 çул вĕреннĕ хыççăн та, унтанпа тем чуль шыв-шур шавласа юхса иртнĕ пулин те, хăй 1-мĕш класа кайнине халĕ те лайăх ас тăвать. Сиккипе чупса иртнĕ вăхăт ачалăха та, çамрăклăха та, ĕçленĕ вăхăта та хыçа хăварчĕ. Çĕршер ача чĕринче сӳнми туйăмпа упранакан çак учитель çулĕсемпе 82 тултарчĕ. Паян та нумай вулать, студентсене, ачасене пулăшать.**

Отаркка ялĕнче çуралнăскер, 1939 çулта ялти пуçламăш шкулта вĕренме пуçларĕ. 2-мĕш класрах сăвăсем çырчĕ, 4-мĕшĕнче «Нарспи» поэмăна пăхмасăр калама пултарчĕ. Унтан Чуманкассинчи 7 çул вĕренмелли шкулта, Муркашри вăтам шкулта вĕреннĕ çулсем... 10 çухрăм утса 7 сехете пĕрремĕш сменăна çитмелле пулнă. Ун чухне шкул хальхи музей çуртĕнче 3 сменăпа ĕçленĕ, ачасем краççын лампин çутипе вĕреннĕ. Вĕреннĕшĕн тӳлеме тивнĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи ачалăха аса илме яланах йывăр уншăн. Нумай ачаллă пысăк çемьере нуши те çителĕклипех пулнă. Акă 3-мĕш класс ачине инкĕшĕ мăшăрĕ патне фронта çыру çырса панăшăн пĕр татăк ыраш çăкăрĕпе тав турĕ. Ăна çисе яриччен йăлт вăйĕ пĕтрĕ унăн. Тахçанах кун пек йывăр «ĕçлемен» унăн тути-çăварĕ. Килти çăкăр тени, йĕкел, çăка çулçи çăнăхне хушса тунăскер, хăех ванатчĕ, çапах çăтма йывăрччĕ. 9 çултан пуçласа аслисемпе пĕрле çурлапа тырă вырнă чухне панă çăкăр татăкĕпе тутлă вĕри апата мĕнпе танлаштарма май пулнă-ши тата?

1949 çулта Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухрĕ. Чăваш чĕлхипе экзаменра «4» паллă лартнă пирки медаль лекмерĕ ăна. Нумай çулсем иртсен унăн икĕ хĕрĕ ашшĕ «çухатнă» «ылтăнне» те, «кĕмĕлне» те тупрĕç.

Çак çулах Василий Федорович Шупашкарти пединститутăн физикăпа математика факультетĕнче вĕренме пуçларĕ. Шупашкар пĕчĕк çеç хула: йывăç çуртсем ытларах, чул çуртсем сахал, асфальт сарнă икĕ кĕске урам, халăх вара çуран çӳрет.

Пурнăç саманчĕсем – асрах вĕсем. Акă кĕсьере нихăçан курман нумай укçа – стипенди. Пĕр сехет çурă черетре тăрсан ĕмĕтленнĕ çăкăр алăра. Епле телей ку. Шывĕ вара урамри колонкăра пур.

Киле Шупашкартан тепĕр кунне каялла утма тивнĕ. Ялсем урлă, уй-хир тăрăх, вăрман витĕр 50 çухрăм çул выртать, хирĕç кĕрхи каç васкать...

Тӳсме хатĕр, урара –
Утма çăмăл çăпата,
Вĕрентет пуçа пусма
Çурăм çинчи кутамкка...
Лăпкă пул эс, тĕттĕм каç,
Хупăрларăн – мĕн тăвас?
Парăнатăп – тыткăнла,
Ан пăрах мана, упра.
Сана çеç калап, итле,
Мĕн усрап хам чĕрере:
Чун çуратнă сăмахсем,
Вăрттăн шухăш-туйăмсем.

Утсан-утсан, нумай утсан тата утсан шуçăм витĕр кил тухать.

1953 çулта института пысăк паллăсемпе пĕтернĕ хыççăн ĕç биографине тăван Муркаш шкулĕнче пуçларĕ. Унта шăпах аслă классемпе ĕçлеме физика учителĕ кирлĕ пулнă. Тӳрех тата математика, черчени, астрономи урокĕсене, физика кабинетне пачĕç. 10-мĕш класăн ертӳçи пулса тăчĕ. Физика кабинетĕнчен иртерех – 13 çултанах уйрăлнăшăн иккĕленет.

Шкулта арçынсем нумай. Вĕсем пурте тенĕ пекех фронтовиксем. Хăйне вĕрентекенĕ учитель пулма пулăшнă: хăвна мĕнле тыткалатăн, ларма-тăма пĕлместĕн, аллунта кĕнеке, урок планĕсем курăнмаççĕ, портфельсĕр çӳретĕн – вăл мăнаçлăх парать, халăх хушшинче эс камне – учитель пулнине пĕлтерет.

Çамрăк физик хăйĕн вырăнĕнче пулнине 2 çултанах ăнланса илчĕ: вĕренсе тухнисенчен 4 ача пĕрле пединститутри физика уйрăмне вĕренме кĕчĕ. Ытти хуласенче те пĕршерĕн кĕнисем пулнă. Пурăна-киле вĕсенчен А. Чугунов пĕрремĕш (пурĕ 4) физика наукисен кандидачĕ пулса тăчĕ, В. Максимов педагогика наукисен докторне çитрĕ.

Тата тепĕр çултан Василий Федоровича районти шкулсенче физикăпа математика предмечĕсемпе экзамен тыттаракан учитель пулма, пединститут Муркаш шкулне çав предметсемпех студентсемпе практика ирттерме юрăхлисен шутне кĕртнĕ хыççăн методист пулма та ăнах çирĕплетнĕ. Часах политехнизаци пуçланчĕ. Ачасене техникăна ытларах вĕрентме пуçăнчĕç. Çĕнĕ ĕç мастерскойĕсене йĕркелесе çитерсен вара машиноведени предмечĕ хушăнчĕ. Ăна та тӳрех çамрăк учителе пачĕç: курссенче те вĕренмелле, ĕç пӳлĕмне те йĕркелемелле. Вĕренӳпе консультаци пункчĕ (заочниксене пулăшма), каçхи шкул, каярахпа тата автодело сехечĕ те «çыпăçрĕ».

Шкул çумĕнчи Шупашкарти автошкул çумĕнче те ĕçленĕ: пысăккисене вĕрентнĕ, экзаменсем тытса удостоверенисем илме хатĕрленĕ. Урoксенче кино кăтартас ĕçе те хăй çине илнĕ. Электротехника сехечĕсем тухсан кабинета пуянлатма тата ачасемпе экскурсисем ирттерме хулари нумай заводсемпе фабрикăсем тăрăх çӳреме тиврĕ. Усси вара куç кĕрет: ĕç пӳлĕмĕ районта кăна мар, республикăра та лайăххисен шутĕнче пулнă. Ачасен рабочи, инженер пулас ĕмĕт çуралнă.

Информатикăпа ЭВТ вĕрентме тытăнчĕç. Шкулта ку вăхăта çамрăк учительсем пуррине курсах ку уроксене те Василий Федоровичăн ертсе пыма тиврĕ. Нумай кĕтнĕ компьютер класне те ăна шанса пачĕç. Çапла вара 7-мĕш кабинет пĕр алăра пулчĕ. Ахальтен каламаççĕ вĕт ваттисем туртакан лаша çине нумайрах тиеççĕ тесе. «Туртах-туртах, вăй патăр сана», – тенĕ пурăнма пĕлекенсем. Хăйсем математика урокĕсем пушанасса кĕтнĕ. Пурă, доска хуратмалли, физика пеккисем (100 ытла прибор) кирлĕ мар.

1988 çултан пуçласа районта информатика тата ЭВТ предметне вĕрентекенсен методпĕрлешĕвне ертсе пырать. (Унччен çав ĕçех вăл Муркаш шкулĕ çумĕнчи 7 çул вĕренмелли шкулсенчи физика, математика, черчени, ĕç урокĕсене ертсе пыракан учительсемпе пурнăçланă пулнă). Черетпе кашни вăтам шкултах (13 шкул) пĕрле пухăнса çĕнĕ предмет йывăрлăхĕсене сӳтсе явнă. Маттур учительсем хăйсен хăнăхнă предметне хăварса ку таранччен курман-илтменнине, çĕнĕрен вĕренмеллине алла илме шикленмен. Вĕсем хăйсен тата ачасен пултарулăхне уçă уроксенче кăтартни пуриншĕн те усăллă пулнă. Кашни шкул – çĕнĕ тĕнче, мĕн чухлĕ кирли, савăнтараканни. Унччен учительсем Муркаш шкулĕнче çулталăкра 1 – 2 хут пухăнса докладсем туса ирттернĕ кăна.

Çĕнĕлĕхсем сиксе тухсан директорăн шухăшлама тивет: тепĕр çын йышăнсан учительсен сехетсем (ĕç укçи те) чакаççĕ, илмесен хушăнаççĕ. Ыттисемшĕн ырă тума кам илет-ха çĕнĕлĕхе, йывăрлăха хăй çине? Нумайăшĕ лайăх вырнаçнă – вырăнтан тапратаймăн. «Пуçа ыраттармастпăр», – теççĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**
**(Вĕçĕ пулать).**

Спорт

# Спорта юрататакан арçынсем 50-ран иртсен те яш пек

Районта спорт мероприятийĕсем нумай иртнине районта пурăнакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ. Юлашки çулсенче кăна мĕн тĕрлĕ çĕнĕ ăмăрту иртмерĕ пулĕ? Çитменнине – спортăн тĕрлĕ тĕсĕпе. Пĕлтĕр район администрацийĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн бокс енĕпе кĕрешессипе республика турнирĕ иртме пуçларĕ. Кăçал 2-мĕш хут пулчĕ вăл. Асăннă ăмăртăва совет çарĕсене Афганистанран илсе тухнине халалласа ирттереççĕ.

Кăçал çулталăк пуçламăшĕнчех пĕрремĕш хут спортăн йывăр тĕсĕпе – штанга йăтассипе ăмăрту иртрĕ.

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин «Муркаш районĕнчи тĕп больница» БУ тĕп врачĕн В.Г. Даниловăн кубокне çĕнсе илессишĕн волейболла вылясси районта ырă йăлана кĕчĕ ĕнтĕ.

Иртнĕ шăмат кун вăл 6-мĕш хут иртрĕ.

– Спортпа туслă пулни, сывă пурнăç йĕркипе пурăнни пире пурăнма, ĕçлеме хавхалантарать. Пурнăç илемне курса тулли пурнăçпа пурăнма пулăшать. Сывă çын вара ĕçре те çитĕнӳсем тăвать, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – пай пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова ăмăртăва хаваслă лару-тăрура уçнă май. Лилия Юрьевна пурне те вăйăра çеç мар, пурнăçра та ăнăçусем сунчĕ.

Ăмăртăва пуçарса яракан Владислав Григорьевич вара çак сăмахсен пĕлтерĕшне татах та тарăнрах курать.

– Сывă пурнăç йĕркипе пурăнсан, арçынсем ватăлмаççĕ. Вĕсем 50-ра та, 60-та та вăй питти арçынсемех,– тет вăл.

Çак сăмахсен пĕлтерĕшне асăннă ăмăртăва хутшăнакансем те лайăх пĕлеççĕ. Мĕншĕн тесен унта шăпах 50-ран иртнĕ арçынсем хутшăнаççĕ. Больницăн тĕп врачĕ районта пурăнакан ытти арçынсем те хăйсем хыççăн спорт енне туртăнасса шансах тăрать.

Мĕнле калаççĕ-ха, ырра час хăнăхма пулать, теççĕ-и? Спортра та çавнашкалах. Унпа туслашсан, уйрăлма çук вара. Йӳçкассинчи вăтам шкулта пĕр класра вĕреннĕ 6 яш паян та хăйсене çамрăк чухнехи пекех туять. 50-ран иртнĕ тантăшсем «Тантăш» ушкăна пĕрлешсе вылярĕç волейболла. Пĕтĕмпе вара çак кун волейбол сетки тавра 6 команда çĕнтерес тесе «чупкаларĕ»: Ильич яч. хис., «Путь Ильича», «Ударник» хуçалăхсен, «Тантăш», «Юнга» тата районти тĕп больница командисем. Кам вĕсене 50-ран иртнĕ тесе калама пултарать. Ав Юнкă ял тăрăхĕнчи В.Ф. Савельев 65-рен иртнĕ пулсан та яш каччă пек правур спортзалта. Унран асли пулмарĕ вăйăра.

Апла пулсан чăннипех те, Владислав Григорьевич калашле, 50–70 çул та арçынсемшĕн нимĕн те мар.



Кубок вара чи вăйлисем патне куçрĕ. Малтанхи виçĕ çул вăл Мăн Сĕнтĕр райповĕн командинчех юлнăччĕ. Виçĕм çул «Ударникăн» «Сурăм» команди туртса илнĕччĕ вĕсенчен. Пĕлтĕр вара больницăсем хăйсен аллинчен вĕçертменччĕ ăна.

Кăçал вара «Путь Ильича» хуçалăх команди туртса илчĕ кубока хуçисенчен. Шур халатлă тухтăрсем хăйсем ăмăртура 2-мĕш вырăна тухнăшăн пĕрре те кӳренмерĕç. «Ударниксем» 3-мĕш вырăн та лайăх вырăн пулнине пĕлсе кăмăллă юлчĕç ăмăртупа.

Ăмăртăва хутшăнакансемшĕн чи кирли, паллах, çĕнтерӳ. Кубоксăр пуçне тепĕр çĕнтерӳ те пур-çке. Вăл вара – хавас кăмăл, çирĕп сывлăх. Тулли кăмăлпах вылярĕç волейболла, ăмăртăва килнишĕн çав тери савăнчĕç. Сывлăх вара, спортпа туслă пулсан, хăйне нумай кĕттермест. Апла пулсан, кубок «ашшĕ» каланă пек, çакнашкал ăмăртăва теннисла та, спортăн ытти енĕпе ирттерни те вырăнлă пулмалла. Ăмăртусене хутшăнма вара Муркаш районĕнче пурăнакан арçынсен кăмăл та, сывлăх та пулĕ. Вара тен арçынсем пурнăçран ир уйрăлса кайни çинчен калакан кăтарту та лайăхланĕ.




**Л. ПАВЛОВА.**

# Тĕнче шайне тухаççĕ

– Апрелĕн 2–7-мĕшĕсенче Чул хула облаçĕнчи Кстово хулинче тĕнче шайĕнчи ăмăрту иртрĕ. Унта Узбекистан, Армени, Казахстан тата ытти çĕр-шыв спортсменĕсемпе пĕрле Раççейри тĕрлĕ кĕтесри боксерсем хутшăнчĕç. Пирĕн районăн 10 боксертан тăракан команди те япăх мар кăтартусемпе таврăнчĕ, – пĕлтерчĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК тренерĕ Сергей Черкашин.

Сергей Васильевич каланă тăрăх кĕрешӳсем икĕ ринг çинче те питĕ хĕрӳ иртнĕ. Турнира 360 спортсмен хутшăннă.

Паллах, кашни боксерăн хăйĕн ăсталăхĕ. Акă Алексей Корчагинăн (56 кг виçе категорийĕ) Узбекистан çĕр-шывĕнчи тĕнче класлă спорт маçтăрĕпе кĕрешме тивнĕ. «Япăх мар кĕрешрĕ, маттур. Ăсталăхне ӳстерни курăнать. Виççĕмĕш вырăна аларан вĕçертмерĕ», – кăмăллăн пĕлтерет Сергей Васильевич.

Виççĕмĕш вырăн йышăнма пултарнисем командăра татах пулнă: Николай Пегасов (38,5 кг), Александр Максимов (40 кг), Родион Музыков (60 кг).

Алексей Николаев (52 кг) турнирта 2-мĕш вырăна тухма пултарнă. Геннадий Балкановпа (47 кг) Денис Грачевăн (49 кг) çитĕнĕвĕсем пысăкрах – вĕсем турнир çĕнтерӳçисем.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Республикăра малта

Чăваш Ен Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн республикăри шкул ачисем çулталăк тăршшĕпе спортăн тĕрлĕ енĕпе иртекен ăмăртусене хутшăнаççĕ. Апрелĕн 9-мĕшĕнче акă çак спартакиадăн черетлĕ ăмăртăвĕ ишессипе иртрĕ.

Пирĕн районти шкул ачисен чысне Çĕрпӳ хулинче иртнĕ ăмăртура Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсем тивĕçлипех хӳтĕленĕ. Малтанхи çулсенче призлă вырăнсем илме пултарнăскерсем халĕ районсен командисем хушшинче ăмăрту çĕнтерӳçисем пулса тăнă, результатсемпе вара Улатăр, Канаш хулисенчен те иртнĕ.

Уйрăм ишевсенче 50 метра ирĕклĕ майпа ишсе Ксения Никонова, Андрей Иванов тата Дмитрий Данилов 2-мĕш вырăн йышăннă. Хутăш эстафетăна вĕсемпе пĕрле командăра Катя Мясникова хутшăннă. Муркашсен чи лайăх кăтарту пулнă.

Пĕтĕмĕшле кăтартăва кашни ишекен пухнă очкосене пĕрле шутласа палăртнă. Çапла вара маларах асăннă çамрăксен лайăх кăтартăвĕсем тата Диана Мясникова, Карина Филиппова, Женя Григорьев, Саша Игнатьев пухнă очкосем район командине мала илсе тухнă.

**Сăн ӳкерчĕкре: ачасем В. Герасимов тренерпа пĕрле.**

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**



# Конкурс на замещение вакантной должности

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики информирует о проведении конкурса на замещение вакантной должности муниципальной службы младшей группы должностей – ведущий специалист-эксперт сектора муниципальных закупок администрации района и приглашает принять участие в конкурсе лиц, удовлетворяющих следующим требованиям:

Граждане Российской Федерации, достигшие возраста 18 лет, владеющие государственным языком Российской Федерации и соответствующие квалификационным требованиям, установленным в соответствии с Федеральным законом "О муниципальной службе в Российской Федерации" для замещения должностей муниципальной службы, при отсутствии обстоятельств, указанных в статье 13 Федерального закона "О муниципальной службе в Российской Федерации" в качестве ограничений, связанных с муниципальной службой.

Для замещения должности ведущий специалист-эксперт сектора муниципальных закупок

Уровень профессионального образования: среднее профессиональное образование.

Стаж муниципальной службы (государственной службы) или стаж работы по специальности: требования не предъявляются.

Профессиональные знания: Конституции Российской Федерации, федеральных конституционных законов, федеральных законов, указов Президента Российской Федерации, постановлений Правительства Российской Федерации, Конституции Чувашской Республики, законов Чувашской Республики, указов Главы Чувашской Республики, постановлений Кабинета Министров Чувашской Республики, иных нормативных правовых актов, Устава Моргаушского района Чувашской Республики, решений, принятых на местных референдумах, иных муниципальных правовых актов Моргаушского района Чувашской Республики и служебных документов, регулирующих соответствующую сферу деятельности применительно к исполнению должностных обязанностей; прав и ответственности; основ организации труда, прохождения муниципальной службы; правил внутреннего трудового распорядка; порядка работы с поручениями, обращениями граждан и иными документами; норм делового общения; правил и норм охраны труда и противопожарной безопасности.

Профессиональные навыки: работы в конкретной, определенной представителем нанимателя (работодателем), сфере деятельности; обеспечения выполнения поставленных задач; реализации управленческих решений; эффективного планирования рабочего времени; расстановки приоритетов и эффективного планирования работы; практического применения нормативных правовых актов; исполнительской дисциплины; пользования современной оргтехникой и программными продуктами; систематического повышения квалификации; подготовки деловой корреспонденции.

Конкурс будет проводиться 05.05.2014 г. с 10-00 до 12-00 по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с.Моргауши, ул.Мира, д.6, каб. 308.

Прием заявок с 16.04.2014 г. по 30.04.2014 г. (включительно) в рабочие дни с 08 ч. 00 мин. до 17 ч. 00 мин. в каб. № 308 администрации Моргаушского района по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул.Мира, д. 6 (тел.: 62-4-37, 62-3-64, 62-4-64)

Муниципальные служащие администрации Моргаушского района Чувашской Республики, изъявившие желание участвовать в конкурсе, подают только личное заявление.

Муниципальные служащие иных органов местного самоуправления Моргаушского района Чувашской Республики, изъявившие желание участвовать в конкурсе, представляют заявление и собственноручно заполненную, подписанную и заверенную кадровой службой органа местного самоуправления, в котором муниципальный служащий замещает должность муниципальной службы, анкету с приложением фотографии, утвержденную распоряжением Правительства Российской Федерации от 26 мая 2005 г. № 667-р.

Для оформления заявки для участия в конкурсе на замещение вакантной должности при себе необходимо иметь:

1) заявление о поступлении на муниципальную службу и замещении вакантной должности муниципальной службы;

2) собственноручно заполненную и подписанную анкету по форме, утвержденной распоряжением Правительства Российской Федерации от 26 мая 2005 г. № 667-р;

3) паспорт;

4) трудовую книжку, за исключением случаев, когда контракт заключается впервые;

5) документ об образовании;

6) страховое свидетельство обязательного пенсионного страхования, за исключением случаев, когда контракт заключается впервые;

7) свидетельство о постановке физического лица на учет в налоговом органе по месту жительства на территории Российской Федерации;

8) документы воинского учета – для военнообязанных и лиц, подлежащих призыву на военную службу;

9) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

10) сведения о доходах за год, предшествующий году поступления на муниципальную службу, об имуществе и обязательствах имущественного характера;

11) иные документы, предусмотренные законодательством.

Кандидат по своему усмотрению может представить другие документы или их копии, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы, характеризующие его профессиональную подготовку.

Документы будут приниматься по 30.04.2014 г. (включительно) до 17 ч. 00 мин.

Конкурс заключается в оценке профессионального уровня кандидатов на замещение вакантной должности муниципальной службы, их соответствия квалификационным требованиям к этой должности.

## Пĕлтерӳсем. Объявления





В ООО «Росметалл» требуются охранники; разнорабочие. Тел.: 8(8352)378848, 8(83541)66-3-84. 4-4.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 21-68.

СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен! ТРИКОЛОР, НТВ+, ТЕЛЕКАРТА от 3000 руб. Эфирные цифровые приемники от 1200 руб. Обмен старых ресиверов на новые! Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 3-10.

Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 7-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92. 5-9.

М-н «ОТДЕЛОЧНИК» реализует строительно-отделочные материалы: профнастил, гипсокартон, фанеру, сетку-рабицу, цемент, шпаклевки, утеплители, сайдинг, двери межкомнатные и металлические, кафельную плитку, пластиковые окна и двери от производителя. НИЗКИЕ ЦЕНЫ! Тел.: 8-961-348-66-36, 8-903-322-59-69. 7-10.

Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»
* Представительство интересов в судах;
* Подготовка исков, договоров, жалоб;
* Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;
* Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);
* Услуги по оценке недвижимости;
* Взыскание по КАСКО, ОСАГО;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Бухгалтерский и кадровый учет.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119
Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48
сайт: www.victoria-ooo.ru




Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр.
Тел.: 8-987-665-02-13. 3-10.

* * *

Продаем пшеницу, ячмень, овес. Доставка.
Тел.: 8-905-119-61-77. 3-5.

* * *

Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7:1.0:1.5, крышки, днища. Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Доставка.
Тел.: 8-902-327-82-52. 3-21.

* * *

СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 6-10.

* * *

Требуются для работы в с. Моргауши автослесари и шиномонтажники, зарплата своевременная, высокая. Тел.: 8-927-844-78-33. 2-2.

* * *

Продаю зерно, семена трав. Тел.: 8-937-011-79-89. 2-2.

* * *

Ир пулакан «жуковский ранний» çĕр улми вăрлăхĕ (60–65 кун хушшинче пулса çитет) сутатăп.
Тел.: 8–927-865-41-24. 1-2.

* * *

Продаются пчелосемьи. Тел.: 8-904-784-06-61. 1-3.

* * *

Продается сено в тюках. Цена – 60 руб.
Тел.: 8-927-994-62-13.

* * *

Июнь уйăхĕнче пăруламалли хура тынашки сутатпăр. Çеçмер ялĕ.
Тел.: 8-937-376-25-01, 8-937-370-11-30.

* * *

Продается база с 2 га земли в д. Шупоси Большесундырского сельского поселения.
Тел.: 8-903-358-40-04.

* * *

Куплю пух-перо. Тел.: 8-903-379-01-23.

* * *

Продаем пчелосемьи. Тел.: 8-937-373-31-46.

* * *

Продаются: двухкомнатная квартира (61 кв. м., 2 этаж) в новом доме в д. Москакасы; деревянный дом с надворными постройками и земельным участком 40 сот. в д. Ахманеи. Тел.: 8-917-657-66-50.

* * *

Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши, пл. 50,7 кв. м., подвал, балкон, сарай.
Тел.: 8-927-844-24-77.

ПРОДАЮ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ БЛОКИ, ЦЕМЕНТ, КИРПИЧ, д. Калайкасы. Тел.: 8-903-346-40-58. 10-10.

Организация реализует: песок речной, гравмассу (ОПГС), щебень различных фракций. Без посредников. Низкие цены. Шешкарская пристань, Моргаушский район.
Тел.: 8-927-995-07-51, 8-937-384-06-50. 2-19.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.
Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 2-10.


## Тав тăватпăр

Хопкĕпер ялĕнче пурăннă ĕçпе вăрçă ветеранне Василий Матвеевич Матвеева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, пускилсене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тав тăватпăр.

**Матвеевсен çемйи.**

Калмăккасси ялĕнче пурăннă Евгений Васильевич Шишокина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн пĕрле ĕçленĕ тус-юлташĕсене, тăвансене, ял-йыша, пускилсене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Шишокинсен çемйи.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды до 49 (сорока девяти) лет из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:130201:466, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Ярославка для строительства и обслуживания магазина, площадью 200 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики просит считать недействительным объявление, опубликованное в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 15 марта 2014 года в № 19 (8183) по поводу предоставления земельного участка в аренду из категории «земли сельскохозяйственного назначения» для ведения сельскохозяйственного производства с кадастровым номером 21:17:050801:706, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, площадью 33127 кв.м.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает, что в извещении о проведении аукциона на право заключения договоров аренды земельных участков, опубликованном в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 29 марта 2014 года в № 23 (8187), допущена техническая ошибка. Вместо: «Время проведения открытого аукциона 01 мая 2014 года (по московскому времени): Лот №1 – 10.00, Лот №2 – 10.20, Лот №3 – 10.40.» следует читать «Время проведения открытого аукциона 06 мая 2014 года (по московскому времени): Лот №1 – 10.00, Лот №2 – 10.20, Лот №3 – 10.40.».


18 апреля 2014 года на центральном рынке с. Моргауши ОАО «Плодопитомник» г. Лысково реализует саженцы плодово-ягодных и декоративных культур, роз, хвойников. Весь товар сертифицирован. Цены от производителя. Тел.: 8(83149)5-42-93.

В магазине «Стройхозтовары» ВЕСЕННИЙ ЦЕНОПАД на строительные материалы! Кирпичи керамические М100 – 11,3 руб./шт. Кирпичи силикатные в ассортименте – от 13 руб./шт. Блоки керамзитобетонные 390х120х188 – 32 руб./шт. Блоки керамзитобетонные 390х190х188 – 42 руб./шт. Блоки газосиликатные 20х30х60 – 150 руб./шт. Цемент М-400, 40 кг – 180 руб./мешок. Возможна доставка кран-манипулятором. Акция действует до 1 мая 2014 года! Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 23. Тел.: 62-0-36. 2-5.

АУ ЧР дополнительного профессионального образования «Учебный центр «Нива» Министерства сельского хозяйства ЧР проводит набор на подготовку следующих специальностей: электрогазосварщик; тракторист-машинист категории AI, B, C, E, машинист экскаватора, погрузчика, бульдозера, катка; водители автотранспортных средств категории А (скутеры и мопеды), В. Начало занятий 14 апреля 2014 г. в 16.00 час. Адрес: ЧР, с. Моргауши, Красная Площадь, 2, станция юных техников. Тел.: 8(8352)229-739, 8-937-378-46-96.




ТЕПЛИЦЫ
от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д.
Телефоны:
8-917-651-00-76
8-927-858-28-79.

В г. Н. Новгород требуются рабочие по строительству. Тел.: 8-906-135-99-00. 1-2.


Администрация Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, 3962,4 балло-гектаров муниципального образования Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в собственность по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:260301:1.

Заявления принимаются в течение шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Одаркино, ул. Центральная, д. 2.

Администрация Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, 12903,2 балло-гектаров муниципального образования Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в собственность по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:220701:1.

Заявления принимаются в течение шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Одаркино, ул. Центральная, д. 2.

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Муркаш районĕн халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центрĕ тата халăха социаллă хӳтлĕх паракан пайĕ кунта ĕçлекен П.И. Гавриловăн амăшĕ

**Вера Демьяновна ГАВРИЛОВА**

вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерĕçĕ.

«Передовик» ял хуçалăх производство кооперативĕн коллективĕ кунта нумай çул хушши гараж заведующийĕ пулса ĕçленĕ

**Евгений Васильевич ШИШОКИН**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе, çывăх çыннисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ Лантăш ялĕнчи лавккара сутуçăра ĕçлекен А.А. Даниловăн тăван шăллĕ

**Андрей Анатольевич БЛИНОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | среда 16 апреля | | | | четверг 17 апреля | | | | пятница 18 апреля | | | | суббота 19 апреля | | | | воскресенье 20 апреля | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +6 | +10 | +14 | +10 | +8 | +8 | +9 | +4 | 0 | +6 | +11 | +6 | +4 | +9 | +15 | +10 | +7 | +11 | +14 |
| Давление мм | 751 | 752 | 751 | 751 | 749 | 749 | 750 | 751 | 752 | 753 | 753 | 753 | 753 | 754 | 754 | 753 | 753 | 753 | 749 |
| Влажность % | 82 | 77 | 58 | 73 | 73 | 93 | 52 | 62 | 77 | 62 | 43 | 77 | 75 | 75 | 56 | 80 | 79 | 75 | 50 |
| Ветер м/с | 5 | 5 | 6 | 4 | 6 | 4 | 6 | 3 | 3 | 2 | 3 | 2 | 2 | 2 | 2 | 2 | 4 | 2 | 3 |
| | Ю | Ю | Ю-З | Ю | Ю-З | З | С-З | С-З | З | Ю-З | Ю-З | В | Ю | Ю | Ю | Ю-В | Ю | Ю | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 05:43 | 20:01 | | | 05:41 | 20:03 | | | 05:38 | 20:05 | | | 05:36 | 20:07 | | 05:33 | 20:09 | |
| Луна восход / заход | | 21:34 | 06:11 | | | 22:48 | 06:42 | | | 23:56 | 07:20 | | | - | 08:08 | | 00:55 | 09:07 | |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 15.02.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 5147.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.